Çĕпре çинчи пек свалка
ЭКОЛОГИ ÇУЛТАЛĂКĔ 3

Камера айĕнчи пурнăç
ЫЙТУ-ХУРАВ 3

Элькерпе пĕр лагерьте
РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН 4

www.tavan-en.ru




Йывăçа та, тимĕре те пăхăнтарать

Причебоксарье плюс

# Тăван Ен




Ĕç сынни 7-мĕш стр.

№ 22 (10561-10562) ИЮНĔН 9-МĔШĔ 2017 ЭРНЕКУНСЕРЕН ТУХАТЬ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать

## ÇĔРШЫВРА

**Июнĕн 2-мĕшĕнче Питĕрте иртнĕ пĕтĕм тĕнчери экономика форумĕнче Стратегиллĕ пуçарусен агенствин гендиректорĕ Светлана Чупушева регионсен инвестици илĕртӳлĕхĕн рейтингне презентациленĕ май çапла каланă:** «Чăваш Республики тĕлĕнмелле чаплă регион. Чăннипех те, республикăн пур ĕç кăтартăвĕсем те çӳллĕ шайра, динамика ырă енне улшăнса пыни куçкĕрет, ыттисемшĕн тĕслĕх». Чăваш Республики Раççей Федерацийĕн 85 субъекчĕ хушшинче маларахри 6-мĕш вырăнтан 2-мĕшне хăпарнă. Кун пек пысăк кăтарту ĕмĕрне те пулман тесен те йăнăш мар.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев бизнес тытăмĕнче ĕçлекенсене, вак тата вăтам предпринимательлĕх пайĕнче вăй хуракансене Чăваш Республикин Правительство членĕсен ĕçне пысăка хурса хакланăшăн тав тунă. «Республика Правительствин приоритечĕ – халăхăн пурнăç условийĕн шайне ӳстерсе пырасси, пысăк технологиллĕ ĕç вырăнĕсем хатĕрлесси, çамрăксене аталанма, пуçарулла проектсене пурнăça кĕртсе пыма кирлĕ пек условисем йышăнасси», – тенĕ вăл.

Райадминистрацин экономика, харпăрлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен уйрăмĕн пуçлăхĕн çумĕ Людмила Софронова пĕлтернĕ тăрăх, районта 36 инвестици проекчĕ пурнăçланать.

## РАЙОНТА

**Шупашкар район кунĕ – «Акатуй –2017» июнĕн 17-мĕшĕнче Янăш ял тăрăхĕнче иртет. Уяв программи çапларах:**

**10:00 – 10:20** – пултарулăх коллективĕсен концерчĕ;

**10:20 – 10:30** – утă çулакансен конкурсĕ;

**10:30 – 12:00** – «Буртас», «Н. Бичурин» интерактивлă площадкăсен ĕçĕ-хĕлĕ;

**10:40 – 11:00** – «Ĕмĕрсене пĕрлештерекен чĕлкĕм» театрализациленĕ представлени;

**11:00 – 12:00** – уява савăнăçлă ларутăрура уçни, чыслав;

**12:00 – 15:30** – концерт тата спорт мероприятийĕсен программи.

Уявра куравсем, выляв аттракционĕсем ĕçлĕç. Суту-илӳ вырăнĕсене, наци кухнисене йĕркелĕç.

КАЛЕНДАРЬТИ КУН



В. Шумилова сăн ӳкерчĕкĕ

# Тумтир лайăх кăмăл парнелетĕр

## Пир-авăрпа çĕмĕл промышленноç ĕçченĕсем професси уявне паллă тăваççĕ

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, Раççей паллă юрăçи Филипп Киркоров тăхăнса çӳрекен чăваш тĕррилле кĕпесем унăн ылтăн аллисем витĕр тухнă. «Паха тĕрĕ» пир-авăр фабрикинче 11 çул модельер-конструкторта вăй хуракан Ольга Ландышева аллинче ручкăпа кăранташ та, йĕппе çип те пĕр пекех выляса тăрать – вăл хăйĕн ĕçне юратса пурнăçлани тӳрех сисĕнет.**

Ольгăна пĕчĕкренех çĕвĕç ĕçĕ илĕртсе тăнă – кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухнех пуканисене хăй çĕленĕ кĕпесемпе тумлантарнă. Асламăшĕ те унăн ал ĕç ăсталăхĕпе палăрнă, тăванĕсен ретĕнче те пир-авăр фабрикинче вăй хуракансем пулнă. Шкул çумĕнче профильлĕ ĕç урокĕсем çĕлес ăсталăха аталантарма хистенĕ – шкултан вăтам пĕлӳ илни çинчен калакан аттестатпа кăна мар, çĕвĕçĕ хăнăхăвĕсене алла илнине çирĕплетекен документпа та тухнă. Професси лицейĕнче модельер-конструктор профессине алла илсен вăл Мускаври аслă вĕрентӳ заведенийĕнче пĕлĕве малалла тăснă. Вĕренӳре тăрăшулăхпа палăрса тăракансkere алла диплом илсенех «Паха тĕрĕ» фабрика директорĕ Наталья Пасынкова ĕç сĕннĕ. Шухăшласа тăман çамрăк – килĕшнĕ, ачаранпах кăмăлланă ĕçе тытăннă. «Мана илемлĕ япаласене курма кăна мар, ăсталама, вĕсем çынсен кăмăлне кайни килĕшет. Тумтир илемлĕ, меллĕ пулмалла, хавхалану илсе килмелле, этеме лайăх кăмăл парнелемелле», – чунне уçать Ольга Ландышева модельер.

Кĕпе çĕленĕ чухне çул ӳсĕмне, кĕлетке хăйнеевĕрлĕхне, çитменлĕхĕсене пытармаллине – пурне те шута илме тивет. Клиентăн кăмăлне тупасси те хăш чухне çăмăлах мар, уйрăмах хĕрарăм-клиентсем хăйсене тиркевлĕ куçпа пăхаççĕ. Модăпа пĕр утăмпа пыма тивет модельерăн. Тумтирĕн эскиз проектне хатĕрлессиех пысăк ĕç, клиентăн кăмăлне тĕпе хурса мĕнле пир-авăр, тĕссем, тĕрĕсем усă курассине палăртса хут çинче тумтир ӳкерĕнет, унтан компьютер урлă плоттерпа лекалăсем тухаççĕ. Тумтир пайĕсене пир çинче ӳкерсе касса кăлараççĕ, сыпăнтарса çĕлеççĕ. Клиент тăхăнса виççе пăхсан кăна кĕпе çĕвĕççен, унтан тĕрĕçĕсен аллине лекет – тин тумтир «çуралать».

«Наци тумтирĕсенче, тĕррисенче халăхăн йăли-йĕрки, пуянлăхĕ, пурнăçĕ, мăнаçлăхĕ сăнланать, пирĕн вĕсене сыхласа хăвармаллах», – çапла шухăшлать çамрăк модельер-конструктор. Нумай пулмасть вăл йĕтĕн наци костюмĕсен коллекцине хатĕрленĕ. Унпа тата ытти сувенир продукцийĕпе хăнасем çитес эрнере иртекен Акатуйра та паллашма пултарĕç.

Хăйĕн ĕçне питĕ юратать Ольга, çакна пытармасть те. «Сĕтел хушшине ларатăп та пуçĕпех ĕçе путатăп, фантазие ирĕк паратăп, хавхаланса ĕçлетĕп», – пурнăçĕнчи чи пĕлтерĕшлĕ утăма – професси суйласа илесси – ăнсăртран мар, шухăшласа туса пурнăçлани курăнать унăн сăмахĕсенче.

**АННА ФИЛИППОВА**

## АСĂРХĂР: АКЦИ!

**Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун «Тăван Ен» хаçат редакцийĕнче**

**«ТипТĔрлĕ июнь»**

**акци старт илчĕ. Çак уйăхра хаçат çыраннă вулакан квитанципе пĕрле редакцире ачапăча супăньне тивĕçĕ. Уйăхлăх вăхăтĕнче журналистсем район ялĕсене те çитĕç. Йыхравлăр çеç!**

Çырăнтару-2017




Сергей Ванюшкин, Иккасси

## Кашни вулакана – парне

**«ТĂВАН ЕН» ЛОТЕРЕЙИН ФОНЧĔ ПУЯНЛАНСАХ ПЫРАТЬ. ВУЛАКАН ХУШШИНЧЕ КОМОД, БЕНЗОÇАВА, КУЛЕР, КУНСĂР ПУÇНЕ КĔМĔЛ ÇĔРĔАЛКА, СПОРТТАВАР, СТРОИТЕЛЬСТВО МАТЕРИАЛĔСЕМ ТУЯНМА СЕРТИФИКАТСЕМ ВЫЛЯТТАРАТПĂР.**




**СТРОИТЕЛЬСТВО ОРГАНИЗАЦИЙĔ ÇУРТА Е ХВАТТЕРЕ, ОФИСА КАРĂНТАРНĂ МАЧЧАПА (НАТЯЖНОЙ ПОТОЛОК) ХĂТЛĂХ КӲМЕ ТАТА ФОТООБОЙСЕМ ÇЫПĂÇТАРМА 19 ПУЛĂШУ СЕРТИФИКАТНЕ СĔНЧĔ.**

**ХАÇАТА ИШЛЕЙ РАЙПОВĔН ЛАВККИСЕНЧЕ ПОЧТА УЙРĂМĔНЧЕН ЙӲНĔРЕХ ÇЫРĂНМА МАЙ ПУРРИНЕ АСА ИЛТЕРЕТПĔР: 300 ТЕНКĔ.**

## УЯВ САЛАМĔ

### Социаллă сферăн хисеплĕ ĕçченĕсем!



**Андрей НИКОЛАЕВ,**
Шупашкар район пуçлăхĕ

Сире професси уявĕпе саламлатпăр!

Халăха социаллă хӳтлĕх парасси – тĕрлĕ шайри влаç органĕсен ĕçĕ-хĕлĕн пĕлтерĕшлĕ тĕллевĕсенчен пĕри. Социаллă хӳтлĕх паракан учрежденисем çине пысăк яваплăх тиенет. Эсир нумай ачаллă çемьесене, инвалидсене, ветерансене тата йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕ çынсене пулăшу парса тăратăр.



**Владимир ДИМИТРИЕВ,**
райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ

Социаллă ĕçчен – яваплă тата тĕрлĕ енлĕ професси, кунта ăста специалист, ытти тисемшĕн пăшăрханма пĕлни, ырă чун-чĕреллĕ пулни пĕлтерĕшлĕ.

### Шупашкар районĕн хисеплĕ çыннисем!

Сире Раççей кунĕпе чунчĕререн саламлатпăр!

Июнĕн 12-мĕшĕ халăхсен пĕрлешĕвне, пирĕн çĕршывăн ирĕклĕхне тата никама парăнманлăхне палăртать. Çак кун Раççей пуласлăхĕшĕн, экономика ырлăхĕшĕн тата хăрушсăрлăхĕшĕн кашни яваплă пулнине халăх ăс-тăнĕнче тепĕр хут çирĕплетет.

Çĕнĕ вăхăт пирĕн обществăран тĕрлĕ кăсăклă ыйтусене татса панă, экономика тата геополитика сферинчи йывăрлăхсем çине хуравсем шыранă тапхăрта пĕрле пулма ыйтать. Пирĕн Тăван çĕршывăн ĕмĕр-ĕмĕр пыракан ăс-хакăл тата культура еткерлĕхĕ, ăрусен паха опычĕ пур йышăнăва та хирĕç тăма вăй çитерме тата социаллă çирĕплĕхе сыхласа хăварма пулăшасса шанатпăр.

Раççей кунĕ кашни çыншăн, мĕнле халăх çынни тата мĕнле тĕне ĕненнине пăхмасăр, пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кашни гражданин Раççейĕн пĕрлĕхлĕ халăхĕн йышĕнче шутланса тăрать, эпир пурте унăн хальхи тата пулас вăхăчĕпе тачă çыхăнса тăратпăр.

Çак уяв кун эпир пур çынна та хамăр çĕршыва аталанма пулăшма, пулас ăрусене ырă опыта пама, мăн асатте-асаннесен паттăрла ĕçĕсене яланах асра тытма чĕнсе калатпăр.

Шупашкар районĕнче пурăнакан кашни çынна тăнăç пурнăç тата тивлетлĕх, çемьере килĕшӳ тата сывлăх сунатпăр!

® 06-17

® 06-20

## ЫЙТУ-ХУРАВ

## Кӳршĕ камерăпа сăнать

**Манăн кӳршĕ лаççи тăррине видеокамера вырнаçтарнă. Вăл манăн килкартине те ӳкерсе тăрать. Пускилпе калаçса татăлма май килмерĕ, камерăсене суд урлă илсе пăрахтарма пултаратăп-и эпĕ?**

*Любовь Кирилловна, Курак Чурачăк*



**Петр ИВАНОВ,**
адвокат, юридици наукисен кандидачĕ:

– Енчен те кӳршĕ ун çурчĕ енне пăхакан камерăсен хăйĕн пурнăçне пырса тивесçĕ, ăна вырнаçтаракан хăйĕнпе çыхăннă информацие пухать тесе шухăшласан суд видеосăнав хатĕрне илсе пăрахтарма пултарать. Видеосăнава уççăн йĕркелемелли тата кӳршĕ территорине кадра кĕртме юраманни – камера вырнаçтарнă чухне пăхăнмалли тĕп йĕркесенчен пĕрисем.

Уйрăм çын пурнăçĕ – вăл ăста тухса çӳренинчен пуçласа мĕн ĕçлени, кампа калаçни таранах – никамăн правине те пăсмасан çакна общество та, патшалăх та тĕрĕслесе тăма пултараймасть. Çакăн пек информацие пухса салатма ирĕк çукки пирки Раççей Федерацийĕн Конституци сучĕ 2005 çулхи июнĕн 9-мĕшĕнче 248-О номерпе ăнлантарни çинче çырса кăтартнă. Çын сăнланнă сăн ӳкерчĕк е видео уйрăм çынпа çыхăннă информацисен шутне кĕрет – çавăнпа та çурт тăррине камера вырнаçтариччен кӳршĕн сирĕнрен çырса ирĕк ыйтмаллах пулнă. Çакăншăн кăмăлсипет тĕлĕшĕнчен кӳнĕ сăтăршăн суд урлă компенсаци шыраса илме те пултаратăр.

**2017 çул – Раççейре Экологи çулталăкĕ**

# Хӳхлет çĕр-аннемĕр

# Çурчĕсем пуян, чунĕсем чухăн...

## Çĕньялсем, ачасен çурăмĕ хыçĕнче ытла вăрах пытанмастăр-и эсир?



Шăмăш çăвинче

**Июнĕн 5-мĕшĕнче – Пĕтĕм тĕнчери тавралăха сыхламалли кун – Пĕтĕм Раççейри «Симĕс патруль» общество организацийĕ 2017 çулхи çуркунне пĕтĕмлетĕвĕсемпе РФ субъекчĕсен экологи рейтингне пичетленĕ. Унта Чăваш Ен Тамбов облаçĕ, Алтай республикипе Алтай облаçĕ хыççăн 4-мĕш вырăнта тăрать. Экологи енчен чи таса 10 регион шутĕнче – Чĕмпĕр, Белгород облаçĕ, Мускав, Санкт-Петербург, Ростов тата Курск облаçĕсем те. Чăваш Ен федерацин Атăлçи округĕсен 14 субъекчĕ хушшинче вара – малти вырăнта. Çав вăхăтрах Çĕньялти евĕр тасамарлăх куç тĕлне пулсан регион татах та маларах вырăна та йышăнма пултарни пирки хаш! сывлатăн.**

### Сăваплă вырăн, анчах таса мар...

Аслă Çимĕке ял-сала çыннисем çăва-масар тирпейлесе кĕтсе илекенччĕ. Хаçатăн иртнĕ номерĕнче нумай ял тăрăх пуçлăхĕ сăмах патăмăр – кашниех хăйсен тăрăхĕнчи çăвасене йĕркене кĕртни çинчен пĕлтерчĕ. Анчах чăннипе те çаплах-ши? Ял тăрăх пуçлăхĕсем отчет парассишĕн кăна сăмаха вылятмаççĕ-и-ха?

Çĕньял ял тăрăхĕнчи 7 ял çынни çĕре кĕнĕ çывăх çыннисене пытармалли вырăн вăл – Шăмăш çăви. Вулакан тилмĕрнипе çула тухрăмăр çак кунсенче масар çине. Çимĕк умĕнхи тата хыççăнхи тирпейсĕрлĕх чунне витерчĕ унăнне. Çăва çинче субботниксене иртнерĕ-ха, анчах ĕçе вĕçне çитиех пурнăçламан – каяш кучисене турттарса тухман. «Эпĕ кунта хĕрĕме пытарнă – унăн вил тăприйĕ çине час-часах килетĕп, тирпейлетĕп. Çăва çинче тасатасси пирки пĕлтерĕве курман. Кӳрşĕ ялсем те çаплах калаççĕ, чылайăшĕ çăва çинче субботник иртнессине сисмесĕрех юлнă», – лару-тăрăва уçăмлатрĕ хальчен субботниксенчен юлман Ксения Михайлова. «Çакăн пек таса мар çăва кама килĕшет-ши, сăваплă вырăн çапла пулмалла-и вара?» – ӳпкелешрĕ вăл вил тăприсем çине хуракан чĕрĕ мар чечек кăшăлĕсенчен, çӳп-çап хутаççисенчен, сапаланса выртакан ăпăр-тăпăртан тăракан каяш куписем çине тĕллесе кăтартса.

2012 çулта уçăлнă çăва çурри тулнă ĕнтĕ. Вилнĕ çынсене пытармалли лаптăк та хĕсĕнсех пырать, сăлтавĕ – çамрăк йывăççем хунаса кайни. «3 çул каялла ял тăрăх пуçлăхĕ пулнă Евгений Зубков хунавсене кастарнăччĕ, унтанпа каллех ӳссе ларчĕç. Çын вилсен урăх ял чиккине кĕрсе кайса пытараççĕ – никамăн та йывăççене кăкласа аппаланас килмест. Йĕрке çук», – чун ыратăвне пĕлтерчĕ хаш сывласа Ксения Петровна.

Çимĕкре пурте тенĕ пекех масар çине васкаççĕ. Хамăр асатте-асаннесене, пурнăçран уйрăлнă çывăх çыннăмăрсене асра тытасси – пирĕн, чĕррисен, сăваплă тивĕçĕ. Çав хушăрах, паллах, вĕсен вил тăприсене те пăхса тăмалла, йĕри-тавра та тирпейлĕх пултăр тесе тăрăшмалла. Шăмăш çăви çинче Çимĕк хыççăн тирпейлеме ĕлкĕреймен тейĕпĕр, анчах та пăхсанах паллă – çӳпçапĕ çак кунсенче пуçтарăнни кăна мар... Çăва йĕри-тавра утса çаврăнсан та каяш пухмалли пĕр контейнер та куç умне пулмарĕ, çӳп-çап куписем вара – кашни утăмра тенĕ пекех...

### Кăмпа евĕр ӳссе ларнă

Çăва çинчи лару-тăрупа паллашнă хыççăн Çĕньяла çул тытрăмăр. Шупашкартан вичĕ утăмра вырнаçнă ял тăрăхĕ мĕнпе тĕлĕнтерме пултарать, пĕлетĕр-и? Капмар та çĕнĕ, илемлĕ çуртсемпе... Чăн-чăн поселок ӳсет аэропортпа юнашар, тинтерех хута кайнă икĕ хутлă çӳллĕ çуртсем куçа илĕртеççĕ. Анчах кăмăла хуçаканни те юнашарах. Шăмăш çăви патĕнчи килекен тӳрĕ çула вырăнтисем лайăх пĕлеççĕ, тумхахлă, кукăр-макăр, тăпраллă, меллех мар. Çулăн икĕ айккипе хыт-хура ӳсет. Унта-кунта кăмпа евĕр çӳп-çап куписем мăкăрăлса лараççĕ, патнерех çитсе пынăçемĕн вĕсем стройка хыççăнхи ăпăр-тапăр пулни курăнчĕ.

Çĕньял салин тĕп урамĕ тасалăхпа кĕтсе илчĕ, кунта санкцилемен каяш куписем тупliех тесе калаймăн та. Вырăнти шкулта вăй хуракан Лия Васильевна çӳп-çапа урама тăкакансемпе çак тăрăхра тымар янăранпах кĕрешет. «Кун пеккине эпĕ çуралса ӳснĕ Вăрнар районĕнче курaймăн. Ас тăвасса, çӳп-çапа килте çунтарса тăнă, урама нихăçан та кăларса тăкман. Кунта çунма пултаракан япаласене те тухса перессĕ вĕт! Кама валли пăрахаççĕ?» – чунĕ кӳтсе çитнине пытармасть вăл. Лия Витальевна ертсе пыракан 7-8-мĕш классенче вĕренекенсен экологи бригади кашни кĕркунне-çуркунне тавралăха илемлĕрех тăвас тесе нумай ĕç туса иртерет. Салара йывăççем çинче, çывăхри вĕтлĕхре вун-вун шăнкăрч вĕлли хăйĕн вырăнне тупнă – пурте вĕсем ачасем килĕсенче ашшĕсемпе, аслашшĕсемпе, пиччĕшĕсемпе ăсталанăскерсем. Янашкасси пĕви, ялти пĕве хĕрри, аэропорт-Çĕньял, Шанар-Çĕньял, Çĕньял-Янашкасси çул хĕррисем, Янашкассинчи плотина шкул ачисем тăрăшнипех тирпейленеççĕ.

Клуб хыçĕнчи тарăн çырма çĕньялсемшĕн тахçанах каяшсем пăрахмалли вырăн пулса тăнă. Юнашар вырнаçнă пĕве те хăйĕн илемĕпе савăнтармасть – çӳп-çап унта та лекнĕ. «Пĕлтĕр те ачасемпе çак пĕвери çӳп-çапа кĕреплесемпе туртса пуçтартăмăр, кăçал та тепре тухмалла пуль», – таврари тасамарлăхшăн кăмăлĕ хуçăлни курăнать Лия Витальевна сăмахĕсенче. Тавралăха тирпейлесси, хăтлăх кĕртесси – пĕр пĕчĕк ушкăн ĕçĕ кăна-ши? Лия Витальевна ачасемпе килсе пуçтарĕ тесе кĕтсе ларакансене намăс мар-ши вара? Мĕн кăна пăрахса тултарман тата çырмана – килте çунакан йывăç-тĕм çаписем, тĕрлĕ ăпăр-тапăр... Вилнĕ йытă кĕлеткипе те симĕс шăнасене пĕр çĕре пухса çаврăнтах выртать вĕт-ха! Çырмаран санкцилемен свалка туса яракансем камсем? Салара пурăнакансемех! Ял тăрăх пуçлăхĕнче юлашки вăхăтра вăй хунă Алексей Васильев каяшсене тракторпа тĕктернĕ-ха, анчах хуплаcах лартайман.

### Лавкка хуçине кам явап тыттарĕ?

Тепĕр ирсĕр вырăн – общество транспорчĕн юлашки чарăнăвĕнче – «Ландыш» лавкка тата кивĕ кантур çурчĕ хыçĕнче... Пырса кĕрсен хăраса кайăн – йывăççен хушшинче çӳп-çап, кĕленче таврашĕ йăваланать – урапа пусма вырăн тупаймăн! Камсем хăйсем хыççăн çакăн пек нĕрсĕр йĕр хăварнă? Кам айăпĕпе çут çанталăк вараланать? Кам ирсĕрленет? Е Çĕньялта ĕçкĕçсем кăна-и?

«Ландыш» лавкка таврашĕнче те контейнерсем курăнмарĕç, ял çыннисем пĕлтернĕ тăрăх, кунта пухăнакан çӳп-çапа çунтарса тăраççĕ, кĕленче савăтсем вара, вут-çулăмра пĕтменскерсем, çаплипех купаланса выртса юлаççĕ.

Тата тепĕр вырăнпа паллаштарчĕç сала çыннисем – Çĕньялта санкцилемен свалка çĕрпе çинчи пек сарăлса пырать. Кунта çӳп-çапа карçинккасемпе мар, машинимашинипе килсе тăкаççĕ. Строительство материалĕсем, çуннă перенесем, ытти ăпăр-тапăр тăкнă лаптăк пĕчĕкех мар. Ял çыннисем вырăнти колхозăн пилорама пулнă лапама тĕллесе кăтартрĕç. Ăна арендăна илнĕ организацире вăй хуракансем хапха тепĕр енче таçтан тиесе килнĕ çӳп-çап купинче металл шыраççĕ иккен. Кайран çӳп-çап ăçта ăсанать – пĕлекен çук, сас-хура кăна çӳрет. Иккĕленӳллĕ организаци тăрăшнипех салари санкцилемен свалка сарăлсах пымасть-ши – ирĕксĕрех пуçра çакăн пек ыйту çуралать?

Ял тăрăх администрацийĕн ĕçченĕсем кашни çулах субботниксем йĕркелеççĕ, çак ĕçе бюджет сферинче вăй хуракансене явăçтараççĕ. Çапах та ял-сала тирпейлĕхĕшĕн вĕсем кăна яваплăши? Çырмасенчи санкцилемен свалкăсене тĕп тăвасси камăн тивĕçĕ-ши?

**Çĕньял ял тăрăх администрацийĕ:**

– Çӳп-çап ыйтăвĕ яланах çивĕч пулнă, çакна ял тăрăхĕ икĕ хула хушшинче вырнаçни те пысăк витĕм кӳрет. Уй-хирте каяшсен куписем ӳсе-ӳсе ларнине пĕлетпĕр – кунта вырăнти халăхран ытла хуласенче ĕçлекен промышленноç предприятийĕсен айăпĕ пысăк – производство юлашкийĕсене ял тăрăх территорийĕсене килсе тăкаççĕ. Шăмăш çăви çинче çак кунсенче субботник иртерĕпĕр, çак ĕçе депутатсемпе старостăсем, ял çыннисем хутшăнасса шанатпăр. «Ландыш» лавкка хуçи Маргарита Шорникова патне çӳп-çап куписене пĕтересси, контейнерсем вырнаçтарасси çинчен çырупа тухăпăр.

Сала çывăхĕнчи сарăлса пыракан санкцилемен свалка çинчен калас пулсан çакна палăртмалла – вăл Кадыков ячĕллĕ СХПК-колхоз харпăрлăхĕнче, çавăнпа çак ыйтупа ăна калаçтарма сĕнетпĕр.



«Ландыш» лавкка тата кивĕ кантур çурчĕ хыçĕнче

В. Шумилова сăн ӳкерчĕкĕсем

**АННА ФИЛИППОВА**

# Пурнăç таппи

РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

## Çăва пуçĕ – I Тĕнче вăрçин ветеранĕ

**Масар вăл – сăваплă вырăн. Пирĕн ялăн çăви хамăр ялтан инçех мар, Тухăçтĕл вăрманĕ пуçланнă çĕрте вырнаçнă. Маларах атăлъялсем çĕре кĕнĕ çывăх çыннисене Çӳлтикасси çăви çинче пытарнă пулсан, халĕ кунта çӳреççĕ. Йывăç хĕрессем те тимĕррисемпе ылмашăнчĕç, чылай вил тăпри çинче мрамортан тата ытти материалтан тунă плитасем вырăн тупрĕç. Çимĕкре тата ваттисен кунĕсенче çынсем çăва çине килсе тăванĕсене асăнаççĕ.**

Масар çине чи малтан пытарнă çынна çăва пуçĕ тесе калаççĕ. 1947 çулта усăлнă çăва çине чи малтан ялти хисеплĕ çынна, I Тĕнче вăрçин ветеранне Ананий Прокопьевич Романова пытарнă. Сăн ӳкерчĕкре шăпах ăна куратпăр. Атăлъялти Прокопий Романов çемйинче 6 ывăл: Риван, Иван, Федот, Данила, Ананий тата Степан пулнă. Ананий Романов 1885 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. Çӳлтикасси шкулĕнче 2 класс вĕреннĕ. Çамрăк ялти хăйĕнчен 2 çул кĕçĕнрех хĕрпе Ефима Ильинична Семеновăпа çемье çавăрнă. Вĕсен 6 ача: 5 хĕр тата пĕр ывăл пулнă. 1914 çулта Ананий Романова I Тĕнче вăрçине



А. Романов

илсе кайнă. Вăл 1916 çулхи пĕр çапăçура тыткăна лекнĕ. 7 çул Германи çĕрĕ çинче тыткăнра пулнă хыççăн тин тăван яла таврăннă. Сăмах май, пирĕн ялти Филипп Матюшкин та 1915 çулта аманса чăваш халăх çыравçипе Çемен Элкерпе пĕрле пĕр лагерьте тыкăнра пулнă. Çыравçă «Вутпа çулăм витĕр» кĕнекинче çав тапхăрти çапăçусем тата тыткăнри салтаксен тертлĕ пурнăçĕ çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă.

1924 çулта Романовсен çемйинче 6-мĕш ача, хĕрĕ Ольга çуралать. 6 ывăлтан пурте I Тĕнче вăрçи витĕр тухса тăван яла таврăнаççĕ, çемье çавăраççĕ. Ананий Романов вăрман хуçалăхĕнче ĕçленĕ, хăйĕн лашипе вутă турттарнă, çурт лартнă. 1930 çулсенче колхоза кĕрсе тăрăшса ĕçленĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан унăн «Дамка» ятлă лашине вăрçа илсе кайнă. Ананий вара вăкăрпа ĕçленĕ вăхăтра аллине сусăрлатнă. Ăна 1947 çулхи январĕн 7-мĕшĕнче çĕнĕ çăва вырăнĕнче пуçласа пытарнă. 1958 çулта мăшăрне Ефимăна та унпа юнашар пытарнă. Çăва çине килекен ял çыннисем авалхи йăлапа çăва пуçне хисеплесе пуç таяççĕ. Халĕ Ананий Романовăн тĕп килĕнче унăн мăнукĕ Владимир Алексеевич çемйипе пурăнать. Ĕлĕкхи сумлă çынсене манăça кăларманни, хисеплени малашне те йăларан тухмасса шанатпăр.

**НИКОЛАЙ СМИРНОВ,**
**АТĂЛЪЯЛ**

ШУПАШКАР РАЙОННЕ – 90 ÇУЛ




**Шуркассинче халăха çырма тата вулама вĕрентеççĕ. 1930 çул. Пĕлӳсĕрлĕхе пĕтерни.**

ОБЪЯВЛЕНИЯ

**06-04.** Администрация Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района извещает о проведении открытого конкурса на право заключения концессионного соглашения в отношении системы водоснабжения, находящихся в муниципальной собственности Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики.

Конкурсная документация по проведению открытого конкурса на право заключения концессионного соглашения в отношении системы водоснабжения, находящихся в муниципальной собственности Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики, утвержденная постановлением администрации Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики № 42 от «19» мая 2017, г. размещена на официальном сайте Российской Федерации в информационно-телекоммуникационной сети «Интернет» для размещения информации о проведении торгов, определенный Правительством Российской Федерации – www.torgi.gov.ru и официальном сайте концедента – cha_saraba@cap.ru.

Срок действия концессионного соглашения – 10 лет. Внесение задатка не предусмотрено. Внесение концессионной платы не предусмотрено.

Состав и описание Объектов концессионного соглашения:

Лот №1. Сооружения водозаборные с кадастровыми номерами 21:21:220109:62, 21:21:000000:6903, состоящие из водонапорной башни металлической, емкостью бака 27 куб.м, 2 артезианских скважин глубиной 108 м. и 118 м., станции управления для скважины, водопроводной сети, протяженностью 3942 м., водозаборных колонок - 8 шт., расположенных по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Сарабакасинское сельское поселения, д. Сятракасы.

Лот №2. Сооружения водозаборные с кадастровым номером 21:21:000000:7029, состоящие из водонапорной башни металлической, емкостью бака 15 куб.м., артезианской скважины глубиной 109 м., станции управления для скважины, водопроводной сети, протяженностью 3152 м., водозаборных колонок - 16 шт., расположенных по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Сарабакасинское сельское поселения, д. Шоркино.

Лот №3. Сооружения водозаборные с кадастровым номером 21:21:000000:7037, состоящие из водонапорной башни металлической, емкостью бака 15 куб.м., артезианской скважины глубиной 84 м., станции управления для скважины, водопроводной сети, протяженностью 1203 м., водозаборных колонок - 6 шт., расположенные по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Сарабакасинское сельское поселения, д. Пикшик.

Заявки на участие в конкурсе и иные письменные обращения принимаются конкурсной комиссией по адресу: 429506, Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Сятракасы, ул. Центральная, д. 10, тел.(83540)2-74-24.

Заявка (на участие в конкурсе по объектам водоснабжения) должна быть представлена в конкурсную комиссию в рабочие дни с 8 час. 00 мин. до 17 час. 00 мин., кроме перерыва на обед с 12 час. 00 мин. по 13 час. 00 мин., по местному времени с 01 июня 2017 г. по 30 июня 2017 года.

Конверты с заявками вскрываются на заседании конкурсной комиссии по адресу: 429506, Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Сятракасы, ул. Центральная, д. 10, в 14 час. 00 мин. по местному времени 30 июня 2017 года.

Конкурсной комиссией 03 июля 2017 года подписывается протокол о результатах проведения конкурса.

Концессионное соглашение должно быть подписано в течение 15 рабочих дней со дня опубликования протокола о результатах проведения конкурса.

В целях предоставления возможности ознакомления с имеющимися расширенными материалами по Объекту концессионного соглашения, каждому участнику конкурса, при условии, что им будет подписано и представлено Концеденту Соглашение о конфиденциальности, предоставляется право доступа к Объектам концессионного соглашения по адресу: 429506, Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Сятракасы, ул. Центральная, д. 10, тел. (83540)2-74-24.

*Глава Сарабакасинского сельского поселения П.Н. Амурцев*

**06-16.** На основании распоряжения администрации Чиршкасинского сельского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики № 07-р от 21.04.2017 г. администрацией Чиршкасинского сельского поселения Чебоксарского района ЧР был организован аукцион на право заключения договоров аренды и продаже земельных участков, который состоялся 08 июня 2017 года в 10-00 в администрации Чиршкасинского сельского поселения Чебоксарского района ЧР по адресу: Чебоксарский район, д. Чиршкасы, пер. Школьный д. 8.

Организатор торгов администрация Чиршкасинского сельского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики.

Результаты аукциона:

| № лота | Месторасположение земельного участка | Разрешенное использование, кадастровый номер земельного участка | Площадь, га | Начальный размер стоимости земельного участка, руб. | Сумма задатка участника аукциона, руб | Вид права | Победитель |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | Чувашская Республика, Чебоксарский район, Чиршкасинское сельское поселение (земли сельскохозяйственного назначения) | для сельскохозяйственного производства 21:21:261601:76 | 13,2 | 9500 | 9500 | аренда сроком на 10 лет | Поступила одна заявка, торги признаны не состоявшимися |
| 2 | Чувашская Республика, Чебоксарский район, Чиршкасинское сельское поселение (земли сельскохозяйственного назначения) | для сельскохозяйственного производства 21:21:261601:77 | 10,56 | 7600 | 7600 | аренда сроком на 10 лет | Поступила одна заявка, торги признаны не состоявшимися |
| 3 | Чувашская Республика, Чебоксарский район, Чиршкасинское сельское поселение (земли сельскохозяйственного назначения) | для сельскохозяйственного производства 21:21:261601:78 | 10,56 | 7600 | 7600 | аренда сроком на 10 лет | Поступила одна заявка, торги признаны не состоявшимися |
| 4 | Чувашская Республика, Чебоксарский район, Чиршкасинское сельское поселение (земли сельскохозяйственного назначения) | для сельскохозяйственного производства 21:21:302003:323 | 45,15 | 29000 | 29000 | аренда сроком на 10 лет | Поступила одна заявка, торги признаны не состоявшимися |
| 5 | Чувашская Республика, Чебоксарский район, Чиршкасинское сельское поселение (земли сельскохозяйственного назначения) | для сельскохозяйственного производства 21:21:261602:212 | 5,28 | 183200 | 183200 | собственность | Заявок не поступило, торги не состоялись |

## Юратнă хаçат юбилейĕччен 49 кун юлчĕ

85 çул

Июлĕн 27-мĕшĕ

*Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерсенче.*

1969 çулхи декабрь уйăхĕнче Т.Л. Логинов редактор тивĕçлĕ канăва тухать. Ун хыççăн 1970 çулхи апрель уйăхĕччен редактор лавне Г.С. Мальцев туртать. Апрель уйăхĕнчен ун вырăнне А.И. Михайлова çирĕплетеççĕ. Вăл ĕçленĕ хушăра пурнăçра тĕл пулакан çитменлĕхсемпе, пăтăрмахсемпе, дисциплинăна пăсакансемпе çивĕч кĕрешме ятарласа «Ятман Якурĕ ятранах ятлать» сатирăллă рубрика йĕркеленет.

1991 çулта çĕршыври улшăнусем хыççăн хаçат ятне улăштарас сĕнӳсем пулаççĕ. Ята улăштарасси хаçат страницисенчи дискуссирен пуçланать. Дискуссире тĕрлĕ сĕнӳ те пулать, анчах та ытларахăшĕ Тăрăнта пурăнакан А.З. Ефимова ялкор (вăл паянхи кун та хаçата статьясемпе тивĕçтерет) сĕннĕ «Тăванъен» ята ырлаççĕ. Ку ыйтăва ĕçтăвкомĕн анлă ларăвĕнче сӳтсе явнă хыççăн 1991 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа паянхи кунччenex «Тăван Ен» ятпа тухса тăрать. Шел те, хаçат тиражĕ çĕршыври йывăр экономика лару-тăрăвне пула çак тапхăрта чаксах пырать.

2000 çулта хаçата электрон майпа калăплама пуçласан, тиражĕ пысăк мар пулсан та, эрнере икĕ хут – юнкун – 4 страницăпа, шăматкун - 8 страницăпа тухса тăрать. Шăматкунхи кăларăмра телекурав программи тата вырăсла страницăсем те вырăн тупаççĕ.

2010 çулта «Тăван Ен» хаçат историйĕнче пысăк улшăну пулса иртет. Чи пĕрремĕш номертен пуçласа вăл «толстушка» пек тухма пуçлать, тепĕр майлă каласан – эрнере пĕрре, 12 страницăпа пичетленет. Унсăр пуçне малтан «Кугеси плюс», каярахпа «Причебоксарье» ятсемпе район хаçачĕ çумĕнче вырăсла вулакансене валли уйрăм хаçат тухма пуçлать. Çак пуçарусене вăл вăхăтра редакторта ĕçленĕ Б.Б. Чиндыков йĕркеленĕ. Анчах та икĕ хаçата туртса пыма редакцие йывăртарах пулнипе 2012 çулта икĕ хаçата пĕрлештереççĕ. «Тăван Ен» 16 страницăпа тухса тăма пуçлать.

**ФАДЕЙ КОНСТАНТИНОВ,**
**КИПЕККАССИ**


ТĂВАНЪЕН

Шупашкар район хаçачĕ

118 (7046) 1991 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ, ытларикун. Хакĕ 5 пус

«Ленинец» мар—«Тăванъен»

Валентина Петровна Гордеева Шĕнерпуçĕнчи çыхăну уйрăмне ертсе пырать.

Геннадий ЕГОРОВ, «Тăванъен» хаçатăн тĕп редакторĕ.

КАШНИ ĔНЕРЕН ЫТЛАРАХ СĔТ САВАС ЕНЕПЕ РАЙОНТИ КОЛХОЗСЕМПЕ СОВХОЗСЕМ МЕНЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТНИ

1991 çул

ШУТА ИЛМЕ

**Тимлĕ вулăр: çитес номертевикторина ыйтăвĕсене хуравлама сĕнĕпĕр.**

ПУЛЬС РЕСПУБЛИКИ

## В тройке лидеров

**23 июня впервые в Чувашии пройдет окружной этап Национальной премии «Бизнес-Успех» в рамках Х юбилейного Чебоксарского экономического форума «Регионы России – новые точки роста».**

Для проведения этапа премии наша республика была выбрана не случайно, она впервые вошла в тройку лидеров Национального рейтинга состояния инвестиционного климата в регионах России в 2017 году, заняв в нем второе место.

Глава Чувашии Михаил Игнатьев подчеркнул: «Это свидетельство правильно выбранного курса развития региона. Мы рады, что сможем представить свои результаты, которых добились благодаря оказанию различных мер господдержки субъектам малого и среднего предпринимательства, привлечению инвестиций». Подать заявку можно до 11 июня 2017 года. Участие бесплатно.

ДЕЛА МЕСТНЫЕ

### НОВЫЕ ТРЕНЬКАСЫ

**Читательница Тренькасинской сельской библиотеки Арина Федорова стала победительницей в номинации «Декоративно-прикладное искусство» республиканского конкурса детского творчества «Прикосновение к мастерству».**

Конкурс для детей – инвалидов и здоровых детей на тему «Эко – невидаль!» проводился в рамках мероприятий, посвященных Году экологии в России в 2017 году. Ее работа называлась «Если будут звучать родники, будет биться и сердце России».

Свои работы на конкурс прислали 126 детей (в том числе 89 – дети-инвалиды) со всей Чувашии. Они представили 94 творческие работы по декоративно-прикладному искусству и 62 живописные работы.

### Д. МАЛЫЙ СУНДЫРЬ

**В Вурман-Сюктерском сельском поселении состоялся самый настоящий праздник для любителей рыбалки.** Жители деревни Малый Сундырь на пруду организовали соревнование по рыбной ловле на поплавочную удочку «Ловись, рыбка». Для многих главным был не результат, а само участие. В состязании участвовали представители самых разных возрастов. За 3 часа они должны были выловить самое большое количество рыбы. По итогам соревнований победителем стал Ю.В. Майоров с уловом в 2,929 кг, на втором – С.М. Александров, на третьем – К.В. Погодейкин.

БУДЬТЕ БДИТЕЛЬНЫ!

## Бесплатный сыр...

**Несколько дней назад на телефон коллеги пришло СМС-сообщение с неизвестного номера: «Зачислено 300 рублей. Точный прогноз погоды. Подключить ХХХХХХ». Через несколько минут пришло следующее сообщение: «Простите, дочка ошиблась. Верните на Билайн ХХХХХХХХХХХ. Таня».**

Добропорядочная коллега уже было собралась перевести средства на указанный номер телефона, однако бдительность вовремя проснулась. Ведь о пополнении баланса сообщения приходят не с мобильного номера, а с коротких номеров операторов, к которым мы уже привыкли.

Как рассказывает заместитель начальника отдела уголовного розыска МВД по Чебоксарскому району Евгений Крылов, сотрудники органов внутренних дел проводят профилактические мероприятия, направленные на борьбу с телефонными мошенниками. «Совершением подобных преступлений чаще всего занимаются осужденные, отбывающие наказание в местах лишения свободы, которые расположены в других субъектах России», — отметил Евгений Викторович.

К примеру, на телефон приходит СМС о том, что вы выиграли какой-то приз, либо лотерею, поездку на море... Для получения более подробной информации вас просят отправить ответное СМС либо перечислить определенное количество денег на счет. Никогда не переводите денег, не убедившись в подлинности информации.

Практически каждый день на наш мобильный телефон приходят СМС от различных организаций. Прочитав сообщение, далее мы видим переход по ссылке. Ни в коем случае не переходите по ней, не убедившись в достоверности информации. Иначе в руки мошенников попадет вся информация с вашего телефона: персональные данные, счета, номера банковских карт и т.д. И это лишь пара способов телефонных мошенничеств, всех уловок не перечислить.

ИЗ ПЕРВЫХ УСТ

# Конкуренция должна быть честной



**Руководитель Чувашского УФАС России Вячеслав БОРИСОВ рассказал нашей газете о наиболее значимых изменениях антимонопольного законодательства, новых полномочиях органа и достижениях в антимонопольном регулировании.**

**– Вячеслав Аркадьевич, в 2016 году вступили в силу изменения в Федеральный закон «О защите конкуренции». Что нового законопроект внес в вашу работу?**

– Он предусмотрел существенное сокращение административных ограничений для бизнеса и одновременное снижение участия государства в экономике. Расширил институт предупреждения и предостережения на недобросовестную конкуренцию, на действия органов власти. В 2016 году существенно снизилось число возбужденных антимонопольных дел и соответственно — количество привлеченных к административной ответственности юридических и должностных лиц. За этот период мы выдали 113 предупреждений, из которых 84 исполнены. То есть 74% ответчиков избежали административного наказания.

Например, 2 марта текущего года Управление выдало администрации Кшаушского сельского поселения Чебоксарского района предупреждение о прекращении до 28 апреля текущего года действий, содержащих признаки нарушения ч. 1 ст. 15 Закона о защите конкуренции. Признаки нарушения выразились в незаконной передаче объектов теплоснабжения ООО «Теплоком». Администрация вернула в муниципальную казну имущество, переданное ООО «Теплоком» на основании договора аренды, тем самым избежала административного наказания.

Подобное предупреждение Управление выдало администрации Кугесьского сельского поселения. Предупреждение антимонопольного органа исполнено в срок.

Но есть в районе и пример неисполнения предупреждения. В ноябре прошлого года территориальный орган выдал предупреждение администрации Вурман-Сюктерского сельского поселения по причине нарушения способа определения торгов, а также порядка предоставления имущества – котельной на газовом топливе общей площадью 600,2 кв. м, расположенного в Чебоксарском районе. Администрация не вернула в муниципальную казну имущество, переданное ООО «Теплоснаб» на основании договора, поэтому в отношении органа местного самоуправления возбуждено антимонопольное дело.

Кроме того, в прошлом году вступили в силу изменения в части рассмотрения жалоб на нарушение процедур, включенных в исчерпывающие перечни процедур в сферах строительства, в том числе на действия или бездействие организаций, оказывающих услуги по передаче электрической энергии, осуществляющих водоснабжение, а также газораспределительной и теплоснабжающей организаций.

**– Чувашское УФАС России также осуществляет контроль проведения торгов. Есть нарушения в этой области в Чебоксарском районе?**

– В прошлом году комиссия УФАС по ЧР рассмотрела обращения физических лиц и выдала администрации Вурман-Сюктерского сельского поселения предписание об устранении допущенного нарушения процедуры проведения аукциона на право заключения договора аренды земельного участка и по продаже земельных участков от 29 января 2016 года путем его аннулирования. Администрация разместила извещение о проведении аукциона на официальном сайте Российской Федерации в информационно-телекоммуникационной сети «Интернет» для размещения информации о проведении торгов в день его проведения. Данное обстоятельство ограничивает количество участников и влияет на результаты аукциона.

**– Расскажите об антимонопольных делах, которые за последние годы вызвали наибольший общественный резонанс?**

– Хочется отметить дело, рассмотренное в отношении ООО «Росгосстрах» в лице филиала в Чувашии, которое затронуло многих автовладельцев. В случае отказа оплатить дополнительное страхование общество необоснованно отказывало в заключении договора ОСАГО и тем самым ущемило интересы автовладельцев. Кроме того, ставя в зависимость заключение договора ОСАГО заключению дополнительного добровольного вида страхования жизни и здоровья, Росгосстрах совершил действия по ограничению конкуренции.

Жалобы на Росгосстрах поступают и сегодня, но их ничтожно мало по сравнению с 2014-2015 годами.

**– Спасибо за интервью.**

**БЕСЕДОВАЛА ЕЛЕНА ДАДЮКОВА**

ДЕНЬ ЗА ДНЕМ

## На двух языках

**1 июня в 14.00 Национальное телевидение Чувашии вошло в региональный спутниковый мультиплекс на платформе ГК «Орион». В связи с этим аудитория расширяется.**

Телеканал стал 28-м по счету, включенным в этот мультиплекс. Канал доступен для абонентов «Телекарты» в пакетах «Стандарт», «Безлимитный», «Легкий». Трансляция осуществляется со спутника Horizons 2, зона покрытия которого охватывает территории европейской части России, Урала, Сибири.

Для настройки просмотра необходимо обновить список каналов рекомендованного спутникового приемника «Телекарта».

МНЕНИЕ



**Алина ИВАНОВА,** библиотекарь:

– Я очень рада, что появился такой канал на телевидении. Надеюсь, что там мы будем наблюдать за известными людьми и нашего района в том числе, гордиться их успехами. С помощью Национального телевидения будем стараться приобщать своих детей к чувашской культуре, чтобы их детство и юность не было зависимо только от компьютера и гаджетов.

БЕЗОПАСНОСТЬ В СЕТИ

## По дорогам Интернета

**Только каждый пятый родитель контролирует то, чем занимаются его дети в Интернете. Ребенок, увлеченный безграничными возможностями Сети, зачастую не может разглядеть рисков и угроз. Сталкиваясь с запрещенными сайтами, дети часто не знают, как поступить и к кому обратиться в такой ситуации.**

В «черный список» сайтов попадают интернет-ресурсы, содержащие пропаганду наркотиков, призывы к суицидам, детскую порнографию, азартные игры, экстремистские материалы. К примеру, в прошлом году прокуратура Новочебоксарска выявила интернет-порталы, которые содержали подробные инструкции о том, как покончить жизнь самоубийством. Сведения находились в свободном доступе и не были ограничены по возрасту. Суд признал сайт запрещенным и постановил заблокировать его.

### Сообщи о противоправных действиях в сети



На сайте Управления Роскомнадзора по ЧР, при обнаружении нежелательной информации можно оставить заявку, позвонив по тел.:

☎8(8352) 55-17-83

или заполнив соответствующую форму на сайте.

Информацию о распространении наркотических и психотропных средств – по тел.:

☎8(8352) 58-33-33.

С жалобой на сайты, содержащие информацию о способах совершения самоубийств и (или) призывы к их совершению, – на **«горячую линию»**:

☎8(8352) 58-27-27.



ВОПРОС-ОТВЕТ

## Берегите свои данные

**? В последнее время участились случаи заражения «вирусами» компьютерной техники. Какова их опасность для рядовых пользователей, и что посоветуете предпринять для уменьшения риска заражения?**

■ *А. МАРТЫНОВ, Б. Катраси*

**Алексей ПЕТРОВ,** начальник отдела информатизации и компьютеризации администрации Чебоксарского района:

– Вредоносный код, о котором вы говорите, получил название WannaCry или WannaCrypt. Действительно, он получил очень широкое распространение почти в ста странах по всему миру всего за несколько дней. У нас в стране также заражению оказались подвержены информационные системы крупных компаний и учреждений.

Особенность WannaCrypt в том, что он может самостоятельно проникнуть в операционную систему, используя ее уязвимости, от самого пользователя (и вероятно даже от антивирусной программы) это может вовсе не зависеть. Далее он, став частью операционной системы, подгружает шифровальщик, который, собственно говоря, и зашифровывает содержимое всех документов.

В связи с этим рекомендуем использовать в работе только лицензионные программные продукты и отказаться от использования устаревших и нелицензионных (пиратских) версий программ, в т.ч. операционных систем, а также использовать регулярно обновляемые антивирусные программы. И, конечно же, регулярно делайте резервные копии данных.

Мы настоятельно рекомендуем установить системное обновление безопасности MS17-010. Обязательно установите антивирусное решение какого-либо из производителей. ■

ОБРАЗОВАНИЕ

# В вуз – по целевому набору


www.academy21.
Учащиеся агрокласса Чебоксарского района побывали в Чувашской ГСХА

**Очень часто приходится слышать о нехватке профессиональных кадров в сельскохозяйственных предприятиях районов Чувашской Республики. Об этом «трубят» руководители колхозов в сезон весеннего сева, заготовки кормов, уборки урожая. Наступает горячая пора, а на предприятии не хватает комбайнеров, механизаторов, ветеринаров. Как оказалось, выход из положения существует.**

Чувашская государственная сельскохозяйственная академия организует целевой прием на обучение по программам бакалавриата, программам специалитета и программам магистратуры. Об этом сообщила проректор по учебной и методической работе Чувашской ГСХА Людмила Корнилова.

По ее словам, академия проводит целевой прием в пределах установленных контрольных цифр. Квота целевого приема по каждой специальности и по каждому направлению подготовки ежегодно устанавливается Министерством сельского хозяйства РФ. «На официальном сайте академии размещены данные о квоте целевого приема с детализацией», – отметила проректор.

По словам Людмилы Корниловой, алгоритм действий администрации района таков: сначала определяются потребности в районе в будущих специалистах, затем проводится отбор кандидатов среди выпускников образовательных учреждений (средних профессиональных) на обучение в академии по программам высшего образования. После этого заключается договор о целевом обучении, и в академию высылается список граждан, заключивших договор о целевом обучении с администрацией (с приложением копий договоров, они необходимы для заключения с академией договора о целевом приеме).

Как рассказала ученый секретарь ученого совета Надежда Алтынова, муниципалитеты по-разному стараются заинтересовать будущих аграриев в целевом обучении с помощью материальной помощи. К примеру, в Мариинско-Посадском районе студентам выплачивается ежемесячная стипендия, другие оплачивают проживание в общежитии.

Заместитель Председателя Кабинета Министров ЧР – министр сельского хозяйства Сергей Артамонов на еженедельной планерке с главами администраций муниципальных районов рекомендовал в максимально сжатые сроки довести эту информацию до всех старшеклассников, обучающихся в школах районов, и заинтересованным организациям помочь в оформлении необходимых документов.

■ **ЯНА МАЙСКАЯ**

СПРАВОЧНО

**При приеме на места в рамках контрольных цифр по программам бакалавриата и программам специалитета по очной форме обучения процедуры зачисления проводятся в следующие сроки:**

- **срок начала приема документов, необходимых для поступления – 20 июня;**
- **размещение списков поступающих на официальном сайте и на информационном стенде - 27 июля;**
- **этап приоритетного зачисления – зачисление на места в пределах целевой квоты.**

**28 июля завершается прием заявлений о согласии на зачисление от лиц, поступающих на места в пределах квот. 29 июля издается приказ о зачислении лиц, подавших заявление о согласии на зачисление, из числа поступающих на места в пределах квот.**

СТРАНИЦЫ ИСТОРИИ

# Советы на местах

**Октябрьская революция 1917 года постепенно охватывала всю территорию бывшей Российской империи. Крестьяне на местах отбирали землю, скот, имущество богачей и на стихийных сходках выбирали новые органы власти.**


Вывоз навоза

Так поступили и жители д. Икково, создав комитет бедноты (комбед). Первым председателем выбрали Куприяна Трофимова. Впоследствии его возглавляли Иван Ведин, чуть позже его брат Николай. Перед комитетом стояли такие трудовые задачи, как перераспределение земли, поддержание общественного порядка, отправка мужчин в ряды Красной Армии. В 1923 году было образовано потребительское общество, чуть позже – кустарно-промысловая артель. По указаниям сверху комбеды становились сельскими советами, куда вошли деревни Шакулово, Ямбарусово.

Вскоре началась коллективизация. В 1923 году в Икково образовался колхоз «1 мая», в 1929-м – «Красное Знамя» в Ямбарусово, «Броневик» в Шакулово. В середине 30-х жители этих сел участвовали в строительстве железной дороги «Канаш–Чебоксары». В 1937 году при колхозе «1 мая» открылся сортоиспытательный участок, который работает по нынешний день. Вокруг этих деревень находились глубокие овраги, в связи с этим было продолжено благое дело предков – возведение плотин. В начале 30-х годов жители сел выбрали председателем Совета Алексея Демьянова. С началом войны в деревнях мужчин почти не осталось, поэтому пост председателя заняла Мария Черкасова и руководила Советом до 1945 года. Это было самое трудное время, но она доверие сельчан оправдала полностью. Осенью 1941 года, когда враг стоял у ворот Москвы, бомбил город Горький, сбросил несколько бомб и на Чебоксары. Икковцы (их было около 50 женщин и подростков) отправились на реку Сура на возведение укреплений, два десятка женщин – за Волгу на добычу торфа.

К концу 1941 года в Икково прибыли 70 человек, эвакуированных из Прибалтики, Ленинграда. Сельсовет должен был разместить их по домам, обеспечивать едой, одеждой, работой. Большинство из них пополнили ряды колхозников, а двоих учителей приняла местная школа. В эти же дни только что сформированный (в основном из жителей Чувашии) артиллерийский полк тоже разместился в Икково. Бойцы будущей 139-й стрелковой дивизии были размещены в одном из зданий школы, церкви, а часть – в домах колхозников. Работали полковая школа и боевой лазарет. Полк покинул Икково в апреле 1942 года. С окончанием войны в Совет вошли деревни Б. Янгильдино, Тохмеево, Шоркино. Забот у Совета стало больше, надо было обеспечивать школы и клубы этих деревень дровами, мебелью. По краям оврагов началась посадка деревьев, кустарников для защиты их от эрозии почвы. Председателями Совета поочередно работали Матрена Сорокина, Семен Мамонтов, Геннадий Агеносов, Александр Петров, Никита Николаев. С 1957-го по 1964 год этот пост занимал участник войны Исай Марков. Более 8 лет бессменным руководителем была Зоя Михайлова. В эти годы сделано очень многое – построен металлический мост на д. Шакулово, открыта железнодорожная платформа «23 км», возведены новые плотины...

Колхоз «1 мая», основанный еще в 1928 году, оправдал свое название, по многим показателям в 60-70-е он был в рядах передовых не только в районе, но и в масштабах республики. Большой вклад в это дело внесли председатели Захар Владимиров, Николай Миронов. С 1973 года сельсовет возглавил Александр Михайлов. Вместе с председателем колхоза Петром Анисимовым они нашли средства для прокладки водопровода в деревне Шакулово, закончили строительство двухэтажного кирпичного здания школы, открыли Дом культуры. Чуть позже вода пришла в дома жителей Икково, Ямбарусово. С 1978 года началась газификация домов жителей сел. С 1980 года председателем избирается житель деревни Чиршкасы Валентин Петров, чуть позже это кресло занимает Раиса Васильева. Стараниями Петра Анисимова и руководителя колхоза «1 мая» Геннадия Ермилова началось строительство асфальтированной дороги «Кугеси-Икково», а чуть позже начинается посадка деревьев по ее краям.

С 1990 года сельсовет реорганизуется в местное самоуправление, сельскую администрацию. Главою администрации избирается Виталий Малюткин. Жизнь продолжается.

■ **ЛЕОНИД ПАВЛОВ**

(Из воспоминаний Ю. Маркова и П. Анисимова)

## ТОЛЬКО ФАКТЫ

### С 1 ПО 7 ИЮНЯ В ЧЕБОКСАРСКОМ РАЙОНЕ

По данным районного отдела ЗАГС

| РОДИЛОСЬ ДЕТЕЙ | | | УМЕРЛО ЧЕЛОВЕК | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| мальчиков | 9 | 12 | мужчин | 9 | средний возраст 62 | 12 |
| девочек | 3 | | женщин | 3 | средний возраст 77 | |

ЗАКЛЮЧЕНО БРАКОВ 5 | СОВЕРШЕНО РАЗВОДОВ 6

ЯЗЫКОМ ЦИФР →

**5826 ветеранов** Чувашии получили компенсацию части затрат на проезд в 1 квартале 2017 года.

## В ЭТОТ ДЕНЬ

**10 ИЮНЯ – ДЕНЬ ПИВОВАРА В РОССИИ.** Ежегодно во вторую субботу июня отмечается главный отраслевой праздник отечественных производителей пива. История пивоварения насчитывает не одну сотню лет, а промышленный размах оно приобрело в 18 веке.

**11 ИЮНЯ – ДЕНЬ РАБОТНИКОВ ЛЕГКОЙ ПРОМЫШЛЕННОСТИ,** по традиции отмечается каждое второе воскресенье июня. Легкая промышленность, несомненно, одна из самых близких к потребителю и покупателю отраслей промышленности.

**12 ИЮНЯ – ДЕНЬ РОССИИ,** день принятия Декларации о государственном суверенитете России, как именовался этот праздник до 2002 года. Это один из самых «молодых» государственных праздников в стране.

ВОПРОС-ОТВЕТ

# Ситуация на контроле

**Слышала, что в Чувашии зарегистрирован случай брюшного тифа. Какова ситуация на данный момент, и как протекает это заболевание?**

*С. СУРИКОВ, Кугеси*

**Управление Роспотребнадзора по Чувашской Республике - Чувашии:**

– Действительно, брюшной тиф зарегистрирован у жителя столицы, вернувшегося с отдыха в Тайланде. На данный момент ситуация находится на контроле министра здравоохранения ЧР В. Викторова. Управлением Роспотребнадзора по ЧР-Чувашии проводится санитарно-эпидемиологическое расследование.

Напомним, что брюшной тиф – острая кишечная инфекция, характеризующаяся лихорадкой, явлениями общей интоксикации, высыпаниями на коже. Источником заболевания является больной человек. Он может выделять возбудителя на протяжении всей жизни, представляя опасность для окружающих. Выделение возбудителя происходит с мочой и калом. В распространении брюшного тифа могут принимать участие и насекомые. Инкубационный период болезни в среднем составляет 10-14 дней (в пределах 3-25 дней).

Первые симптомы – побледнение и сухость кожи. Высыпания появляются начиная с 8-9 дня болезни в виде небольших красных пятен до 3 мм в диаметре. Брюшной тиф может осложняться кишечным кровотечением.

Профилактика подразумевает соблюдение личной гигиены и гигиены питания. Не следует приобретать продукты в торговых палатках у обочин дорог. Чаще следует мыть руки с мылом.

СОВЕТ ВЕТЕРИНАРА

# Сначала – анализы

**Как часто необходимо проглистовать домашних животных, в частности, кошек и собак?**

*И. ПАТРИКЕЕВ, Чебоксары*

**Алексей ХУНДИМИРОВ,** ветеринар:



– Профилактическая дегельминтизация четвероногих питомцев желательна 3-4 раза в течение года. На сегодняшнее время на рынке ветеринарных лекарств есть огромный ассортимент антигельминтиков с разными методами применения (таблетки, суспензии, капли на холку). Для этого я рекомендую хозяину сдать кал животного на анализ, затем обратиться с ними к ветеринару. По выявленному типу глистов он назначит препарат, действующий на этот вид гельминтов.

ЛЮДИ ДЕЛА

# В постоянном творческом поиске



**В мае текущего года Указом Президента РФ Владимира Путина жителю Чебоксарского района Николаю Вострикову присвоено почетное звание «Заслуженный учитель Российской Федерации».**

15 января 1956 года в деревне Крикакасы Чебоксарского района в семье колхозников родился мальчик Николай. С малых лет, как только он научился держать в руках лопату, вилы, грабли, вместе со взрослыми работал на полях колхоза «Ленинец». Вносили удобрения, сеяли, убирали сено, солому, собирали картофель. Осенью Николай работал на сортировке и очистке зерновых культур на току.

В 7-ом классе Яушской школы молодой человек вступил в комсомол, в 8-ом – его выбрали секретарем первичной комсомольской организации школы.

В 1971 году, когда Николаю было 15 лет, его две сестренки 12 и 9 лет остались без родителей. Все домашние дела и заботы по воспитанию, обучению и материальному содержанию младших сестер легли на неокрепшие плечи Николая.

Во время школьных каникул молодой человек работал в ПМК-65 на строительстве санатория-профилактория «Волжские Зори», затем на Чебоксарском заводе резинотехнических изделий.

В старших классах парень учился в Вурман-Сюктерской средней школе, был редактором классной и школьной стенной газеты.

После получения аттестата о среднем образовании Николай поступил учиться в ЧГПУ им. И.Я. Яковлева на художественно-графический факультет. Во время учебы в институте успевал трудиться прессовщиком на том же заводе, где до этого работал. После 4 курса устроился в отдел материально-технического снабжения на Чебоксарский приборостроительный завод.

В июне 1978 года молодой учитель был направлен Министерством просвещения ЧАССР в распоряжение районного отдела народного образования Чебоксарского района, где был назначен учителем трудового обучения Кугесьской средней школы. С тех пор Николай Андреевич работает там.

Николай Востриков – учитель высшей категории, принимает активное участие в общественной жизни школ района, охотно делится своим опытом, проводит открытые уроки, мастер-классы по инновационным технологиям для педагогов района, региона и страны. «Мы с моими воспитанниками постоянно находимся в творческом поиске, познаем секреты не только ручной и механической обработки древесины и металла, но и художественной резьбы по дереву, осваиваем конструирование моделей самолетов, ракет, космических аппаратов, судов, кузнечное дело», – делится Николай Андреевич.

Кроме своего предмета он ведет кружковые занятия «Резьба по дереву», «Авиомоделирование», «Ракетомоделирование», «Судомоделирование», «Автомобилемоделирование» и занятия с одаренными детьми. Его воспитанники традиционно становятся победителями и призерами районных, республиканских, всероссийских олимпиад по технологии, удостаиваются различных стипендий и премий.

Николай Востриков разработал авторские программы курсов «Художественная ковка металла», «Обработка металла и художественная ковка».

С супругой Венерой Григорьевной Николай Андреевич прожил 39 лет, воспитали двоих детей. Сын и дочь также пошли по стопам отца и получили профессию учителя.

Всех наград, которых удостоен Николай Востриков, и не перечесть. В его копилке большое количество грамот, нагрудный знак «Почетный работник общего образования РФ», звание «Ветеран труда», звание «Заслуженный учитель ЧР» и многие другие.

**ЯНА МАЙСКАЯ**

## ГОРОСКОП НА НЕДЕЛЮ

**ИЮНЬ 12 - 18**

У **ОВНОВ** отношения со старшим поколением могут дать трещину. Будьте терпимее и благосклоннее. Наладятся отношения с коллегами.

**ТЕЛЬЦЫ,** на работе у вас появится недоброжелатель. Дайте ему понять, что вы не позволите себя обижать. Скоро он сам отойдет в сторону.

В жизни **БЛИЗНЕЦОВ** произойдут серьезные изменения, в основном они будут положительными. От поклонниц(-ков) не будет отбоя.

**РАКИ,** будьте начеку: недоброжелатели могут поставить вам ловушку. Прислушивайтесь к советам, которые будут давать друзья.

**ЛЬВЫ,** с осторожностью и вниманием отнеситесь к бумагам, которые будут проходить сейчас через вас. Поддерживайте близких.

**ДЕВ** ждут радостные встречи. Не удивляйтесь, если друзья захотят увидеть вас у себя в гостях. На работе все начнет валиться из рук.

**ВЕСАМ** пора присмотреть собственный участок или чаще наведываться к друзьям. За дачными заботами вы сможете отвлечься от проблем.

**СКОРПИОНАМ** нужна встряска. Накопившиеся эмоции могут проявиться не самым лучшим образом. Увеличьте физическую нагрузку.

**СТРЕЛЬЦАМ** больше времени захочется проводить с домочадцами. Для улучшения общего самочувствия отправляйтесь за город.

**КОЗЕРОГИ,** прислушайтесь к советам друзей, чтобы не наделать глупостей. В выходные постарайтесь развеяться, встретиться с родными.

У **ВОДОЛЕЕВ** возможны неожиданные повороты в судьбе, которые отразятся на личной жизни. В выходные дни может ожидать судьбоносная встреча.

**РЫБЫ,** перестаньте ссылаться на занятость и домашние проблемы. Займитесь фитнесом и не пропускайте занятия.

КРАСОТА И МОДА

# Как убрать нависшее веко

**Кожа век самая нежная и с возрастом становится не такой упругой и эластичной, как бы нам хотелось. Как же убрать нависшее веко в домашних условиях.**

Понадобится по 50 гр молока и минеральной воды, а также 4 чайных ложки сока алоэ. Заливаем в формочку для льда и морозим. Каждое утро протираем кожу вокруг глаз.

**Гимнастика для глаз**

№1. Закрываем глаза. Не открывая их посмотреть вверх и вниз, напрягая по максимуму. Повторить 5 раз.

№2. Поднимаем голову, максимально смотрим вверх и часто моргаем. Остаемся в таком положении 30 секунд.

№3. Отводим голову назад. Крепко зажимаем веки на 5 секунд, затем расслабляем. Повторяем упражнение 5-7 раз.

КУЛИНАРНЫЕ ИЗЫСКИ

# Крабовые палочки в кляре с сыром

**ИНГРЕДИЕНТЫ:** крабовые палочки, сыр.

Режем сыр полосочками. Разворачиваем палочки. Теперь кладем сыр и заворачиваем обратно.

**ДЛЯ КЛЯРА ПОНАДОБИТСЯ:** мука, молоко, яйца, соль, перец.

Все смешиваем, должно получиться так, как сметанка. Макаем палочки в кляр. И обжариваем с двух сторон на сковороде.



СОВЕТЫ НА КАЖДЫЙ ДЕНЬ

# Как оттереть жвачку от одежды

**Жевательная резинка прилипла к любимой вещи? Не переживайте – очистить одежду можно, хоть это и достаточно сложно.**

- Положите вещь в морозильную камеру. Жевательная резинка станет твердой и ее легко снять с одежды щеткой.
- Используйте пятновыводитель. Для этого нанесите средство на пятно от жвачки. Замочите одежду в воде. Счистите жвачку щеткой, постарайтесь ее не втирать. Постирайте одежду.
- Застирайте вещь в прокисшем молоке, кефире или простокваше. Затем постирайте ее обычным способом.
- Используйте растворители. Нанесите средство на пятно, пождите 5 минут и соберите та тряпку от центра к краю. При необходимости процедуру повторите.

ÇАМРĂК ĂРУ

# Ирпе – зарядка, каçпа – дискотека



Шупашкар районĕнчи çамрăксен правительствин представителĕсем

**Атăл леш енче вырнаçнă «Буревестник» кану базинче июнĕн 6-10-мĕшĕсенче çамрăксен регион аталанăвĕн «МолГород-2017» форумĕ иртет. Мероприяти республикăри хастар çамрăксене аталанма, çамрăксен политикин тытăмĕнчи программăсене, проектсене тата ĕçĕсене пĕрлештерме пулăшакан лапам пулса тăчĕ.**

Кăçал унта 14-30 çулсенчи пĕр пине яхăн каччăпа хĕр пухăнчĕ. Уйрăм мероприятисене хутшăнакансемпе хăнасем те – пурĕ 700 яхăн çын – пулмалла. ЧР Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерстви пулăшнипе йĕркеленĕ Форум «Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен тата студентсен XIX фестивалĕ умĕн» лозунгпа иртет.

Форума çамрăксем хăйсем ăсталанă аталаннă инфраструктурăллă палатка лагерĕ евĕр йĕркеленĕ. Çамрăксем тăватă вĕрентӳ лапамĕнче: «Эсĕ – предприниматель», «Уçă хула», «Волонтерство», «Масс-медиа технологийĕсем» пĕлӳ пухĕç. Тематикăллă виçĕ кунра «Наука тата инноваци», «Проектсене тытса пыни», «Раççейри экологи çулталăкĕ» вĕрентӳ программине те пăхса тухма планланă.

Форума 70 ытла эксперт хутшăнчĕ, вĕсенчен çурри – ют хуласенчен. «Масс-медиа технологийĕсем» лапам экспертсемпе пуян пуласса кĕтеççĕ. Хальхи МИХ йĕркеленĕвĕ тата аталанăвĕ пирки «Хăрушсăрлăх» медиаплатформăн тĕп директорĕ Евгения Королева каласа парĕ. Медиарынокпа регионсенчи телеканалсен никĕслевçи Елена Ульянова паллаштарĕ. Форума хутшăнакансене «Пĕрремĕш канал» журналисчĕ Максим Шарафутдиновран мастер-класс та кĕтет. «Сам себе режиссер» программа ертӳçипе, Халăхсен хушшинчи кино институчĕн проректорĕпе Алексей Лысенковпа иртекен тĕл пулу та кăсăклă пулмалла.

Спорт программине пляж волейболне кĕртнĕ. «Кросс-фит», ГТО нормисене памалли площадкăсене пĕрремĕш хут йĕркелĕç. Форум тăршшĕпех туристсен хули ĕçлĕ. Кашни ир паллă спортсменсем ирттерекен зарядкăран пуçланĕ. Каççерен вара кану программи, дискотека, кăвайт умĕнчи каçхи апат кĕтет.

**СĂМАХ МАЙ**

**Йĕркеленнĕренпе 8 çул хушшинче «МолГород» форума çĕршыври 15 регионтан 8 пин ытла çамрăк хутшăннă.**

МИЛЕНА СЕРГЕЕВА

ПРИЗЫВ

# Çара – контрактпа

**Ытти çамрăк пекех, Юра Никитинăн та кăçал салтака кайма ят тухрĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕн 19 çулти яшĕ вăрман техникумне пĕтернĕ хыççăн вăхăтлăх службăра тăмасăрах тӳрех контрактпа çара кайма тĕллев лартнă. 2017 çулхи майăн 1-мĕшĕнче Раççей Президенчĕ Владимир Путин профессилле вăтам пĕлӳллĕ призывниксене те контрактпа хĕсметре тăма ирĕк паракан закона алă пусса çирĕплетнĕ хыççăн халĕ унăн та çакăн пек май пур. Июнĕн 5-мĕшĕнче Кӳкеçри çар ĕç комиссариатĕнче пулас салтаксем контрактпа çар службинче тăракансемпе тĕл пучĕç.**

«Çулталăк автоматпа чупса казармăра пурăнас вырăнне 24 уйăх контрактпа служба ирттерсе укçа-тенкĕ илсе тăма пулать, – ăнлантарчĕ Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи çар комиссариачĕн ертӳçи Александр Кочуров çамрăксене мĕнле службăна суйласси пирки тĕплĕн шухăшлама сĕнсе. – Çар чаçĕнче призывниксем 3 уйăх пыракан тĕрĕслев витĕр тухнă хыççăн служба условийĕсем кăмăла кайсан 24 уйăхлăха контрактпа килĕшӳ тума пултараççĕ. Енчен те призывник тĕрĕслев срокне ăнăçлă вĕçлеймесен каччă 12 уйăх хĕсметре тăрса çĕршыв умĕнчи тивĕçе тататать». Тĕл пулăва килнĕ ытти район каччисем, çар тивĕçне контрактпа пурнăçлакан, хăйсен хĕсметри пурнăçĕ пирки каласа кăтартрĕç.

Акă Муркаш районĕн 20-ри каччи Даниил Храмов Цхинвалта (Кăнтăр Осети) контрактпа службăра тăрать. 2015 çулта вăл пĕрле службăра тăракансемпе халăхсен хушшинчи «Танк биатлонĕ» конкурса хутшăннă, Ангола, Венесуэла, Кувейт, Монголи, Никарагуа, Армени, Таджикистан, Инди тата Киргизи командисемпе Алабинора (Мускав облаçĕ) ăмăртнă. РФ тип çар вăйĕсен главнокомандующийĕ Олег Салюков генерал-полковник «Суворовский натиск» конкурсри «Хăвалаласа харпăр хăйшĕн пĕрремĕш вырăншăн» номинацире çĕнтернĕшĕн РФ тип çар вăйĕсен командине, пехота çар машинин экипажне – БМП командирне Евгений Зимин сержанта, Владимир Литовченко наводчик-оператора, Даниил Храмова механик-водителе УАЗ «Патриот» автомашинăсен уççисене панă. Контракт службине чăваш каччи ултă кунлă ĕç эрнипе танлаштарчĕ.





А. Тихонова сăн ӳкерчĕкĕсем

Юра Никитин контрактпа службине суйларĕ

Çак тĕл пулăва килнĕ Патăръел районĕн каччи Евгений Петров та çар тивĕçне контрактпа пурнăçлать. Ăна малалла тăсса Таджикистана каяс шухăш пуррине пĕлтерчĕ вăл.

«Призывпа пĕр çулталăк кăна хĕсметре тăма тивнĕрен сирĕнтен чылайăшĕ çар тивĕçне контрактпа пурнăçлама май пурри пирки аса та илмест. Анчах та суйлавăн ытти критерийĕ призыв служби майлă мар», – терĕ контрактпа çара суйлакан пункт офицерĕ Игорь Иванов аслă лейтенант çамрăксене контракт тата призыв службисем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăнине ăнлантарса. Чи малтанах контрактпа хĕсмете кайсан ăçта службăна тăрассине суйлама ирĕк пуррине палăртрĕ вăл. Призывпа кайнă чухне çакăн пек ирĕке памаççĕ. Çулталăклăха салтак аттине тăхăннă каччă казармăра пурăнать. Хăш чухне унта темиçе рота вырнаçать. Ротăра – çĕре яхăн салтак. Тĕрлĕ регионти, тĕрлĕ çемьери, тĕрлĕ воспитани илнĕ çынсен пĕр-пĕринпе пĕр чĕлхе тупма тивет. Контрактник вара 4-6 çын пурăнакан пӳлĕмре служба хыççăн канать. Чылай чухне салтаксем хваттер йышăнса унта темиçен пурăнаççĕ. Хваттершĕн тăкакланă укçа-тенкĕн пĕр пайне çĕршыв каялла тавăрса парать. Ку, паллах, казармăра пурăннинчен лайăхрах. Ĕç кунĕ контрактпа службăра тăракансен эрнере ултă кун чухлĕ, вăл 9 сехетрен пуçласа 18 сехетчен тăсăлать. Призывпа салтака кайнисен вара 6 сехетрех ура çинче пулмалла. Çывăрма вара вĕсем каçхи вунă сехетре кăна выртаççĕ. Контрактниксен чаçрен тухма юрать пулсан, призывниксен ун пек ирĕк çук, канмалли кунсенче те вĕсем яланах казармăра.

Пулас салтаксене кăсăклантаракан тепĕр ыйту шалупа çыхăннă. Призывниксем уйăхне икĕ пин тенкĕ илеççĕ пулсан, контрактниксем – 20 пин тенкĕ ытла. Кунсăр пуçне контрактпа службăра тăракансен отпуск (30 талăк) та пур. Çул çинчи кунсене те отпуск çумне хушаççĕ. Вăтам пĕлӳллĕ контрактниксем вĕрентӳ заведенине куçăмсăр майпа вĕренме кĕрсе тӳлевсĕр аслă пĕлӳ илееççĕ. Сессии вăхăтĕнче вĕрентӳ отпускĕ пур. Малалла та пурнăçне çарпа çыхăнтаракансем çар ипотекипе усă курса çĕршыври кирек хăш регионта та хваттер туянма сертификат илме пултараççĕ. Паяхи куна вăл 3 млн яхăн тенкĕпе танлашать. Çак çăмăллăхпа иккĕмĕш контрактăн виççĕмĕш çулĕнчех усă курма май пур. Пенсие тухсан çак хваттер çар çыннине куçать.

«Контрактпа службăна тăрсанах тӳрех ăçта та пулсан çапăçма яраççĕ тесе шухăшлать чылайăшĕ. Анчах та çак шухăш чăнлăхпа тӳр килмест», – терĕ Игорь Иванов çамрăксене контрактпа службăра тăма хăрамалла маррине палăртса. Çапăçу хирне салтака хăй ирĕкĕпе, килĕшĕвĕпе кăна яраççĕ. Çамрăксем контрактпа хĕсметре тăма хатĕррипе хатĕр маррине палăртса хăйсен шухăшĕсене июнĕн 30-мĕшĕччен пĕлтерĕç. Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи çар комиссариачĕн призыв комиссийĕн уйрăмĕн пуçлăхĕ Валерий Николаев яваплă утăма палăртма вĕсене шăпах çак кунччен вăхăт панине пĕлтерчĕ.

АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА

КУРАВ

# Район историйĕ

## сăн ӳкерчĕксенче

**Шупашкар районĕ 90 çул тултарнине халалланă мероприятисем районта черетленсе кăна тăраççĕ. Июнĕн 6-мĕшĕнче Кӳкеçри «Бичурин тата хальхи самана» музейра Шупашкар райисполкомĕн пĕрремĕш председательне Илья Николаевич Яштайкина халалланă сăн ӳкерчĕксен куравĕ уçăлчĕ.**

Шупашкар райадминистрацийĕн культура, туризм тата социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ Маргарита Павлова курава уçнă май музей хăнисене районти 172 ял-салара 62 пин ытла çын пурăнни пирки каласа кăтартрĕ. Ку хутĕнче музей элĕксене йышăнчĕ. Ытти районтан Шупашкар районĕ культура учрежденийĕсен шучĕ нумайрах пулнипе те уйрăлса тăрать. Шупашкар райисполкомĕн пĕрремĕш председателĕ Илья Николаевич ăслă, яваплă пулнине, хăйĕн ĕçне аван пĕлнине палăртрĕ вăл. Унăн ĕçĕ-хĕлĕ ыттисемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче. Тĕнчипе палăрнă çынсен хушшинче Шупашкар район çыннисем нумайĕи пирки каларĕ Маргарита Яковлевна.



И. Яштайкин

Музей фончĕн управçи Оксана Ижедерова экскурси ирттерчĕ, Илья Яштайкин биографийĕпе паллаштарчĕ. Курма килнисем ăна тимлĕн итлерĕç. Илья Николаевич Хĕрлĕ Чутай районĕнче çуралнă. 30 çул тултаричченех ăслă пĕлӳ илнĕ вăл. 1908-1912 çулсенче Варшавăри император университетĕнче историпе филологи факультетĕнче вĕреннĕ. 1914 çулта ĕç çулне преподавательтен пуçланă. 1920-1922 çулсенче Чăваш автономи облаçĕн халăх вĕрентĕвĕн облаçри уйрăмĕн пĕрремĕш заведующийĕ пулнă. Шупашкар райисполкомĕн пĕрремĕш председателĕ пуличчен вĕрентӳ сферинче вăй хунă. Районта çулталăк (1927-1928 çулсем) ĕçленĕ хыççăн Мускавра, Канашра, Саратовра, Хĕрлĕ Чутайра вĕрентӳ сферин ертӳçисенче тăрăшнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче вăл шкулта учительте ĕçленĕ чухне ачасемпе пĕрле уя тухса пучахсем пуçтарнă.

1944 çулта Илья Яштайкина Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ учителĕн ятне панă. Хăйĕн юлашки çулĕсене вăл Мускаври ваттисен интернатĕнче ирттернĕ. Илья Яштайкин, аслă пĕлӳллĕ пулнăскер, пурнăç тăршшĕпех педагогсем валли шкулсем уçса, вĕрентекен пулса ачасене пĕлӳ пама тăрăшнă.

Оксана Ижедерова патшалăх ĕçченĕн пурнăçĕпе паллаштаракан сăн ӳкерчĕксен тата документсен копийĕсене 2004 çулта унăн тăванĕ Владимир Немешкин панине пĕлтерчĕ. Куравра Илья Яштайкин хĕрĕ Татьяна патне интернатран янă çырăвĕсене, çемйин сăн ӳкерчĕкĕсене те курма пулать.

Çак кун музей хăнисем «Шупашкар район летопиçĕ» сăн ӳкерчĕксен курав залĕнче район историйĕпе, унăн паллă çыннисемпе, хăш-пĕр предприяти аталанăвĕн хроникипе, культура, спорт мероприятийĕсемпе çыхăннă сăн ӳкерчĕксене тăратнă. Районти тĕрлĕ ял-сала пирки çырнă кĕнекесене те алла тытса пăхма май пур кунта. Элĕк район хăнисем Шупашкар район энциклопедине курсан хăйсем те çакăн пек энциклопедие пичете хатĕрленине пĕлтерчĕç.

Курав июнĕн 15-мĕшĕччен ĕçлĕ.

АНЖЕЛИКА ФАДЕЕВА

Р 05-67



## Вечный почет ветеранам, а молодым – дорогу в жизнь

# Профессионал и человек с большой буквы!

**42 года работы в банковской системе региона пролетели как один день для Галины Глухаревой, бывшей управляющей дополнительным офисом Россельхозбанка в поселке Кугеси. Галина Алексеевна из тех людей, в судьбе которых ярко отразилась вся жизнь страны, республики, района.**



Г. Глухарева в одном из предприятий района

7 июня текущего года ей исполнилось 65 лет. Галина Глухарева вспоминает, как она, 18-летняя девушка, в 1970 году после окончания Куйбышевского учетно-кредитного техникума поступила на работу в Кугесьское отделение Госбанка СССР простым кредитным инспектором. За годы примерного труда она выросла до заместителя управляющего отделения.

«Время в трудах пролетело незаметно, в самом начале помогали товарищи по службе, за что очень им благодарна, – вспоминает юбиляр. – Помню, как в стране развернулась перестройка, произошли стремительные изменения в экономике, к которым нужно было адаптировать работу финансового учреждения». По ее словам, на месте Госбанка СССР был создан Агропромбанк, затем Чувашсельхозбанк. Благодаря ее стараниям было построено здание нынешнего Пенсионного фонда в п. Кугеси. Менялись названия, но Галина Алексеевна на своем посту по-прежнему преданно защищала интересы аграриев и служила тому делу, которое профессионально выполняла. Речь идет о финансовой поддержке агропромышленного комплекса. С 1991-го по 2012 год Галина Глухарева была бессменным управляющим офиса аграрного банка в Чебоксарском районе – одном из значимых в плане сельхозпроизводства. Одними из первых клиентов Галины Глухаревой были такие предприятия, как СХК «Атлашевский», СХПК-колхоз им. Ленина, колхоз им. Свердлова, СХПК-колхоз им. Куйбышева.

О Галине Алексеевне говорят не только как о профессионале, но и как об отзывчивом и душевном человеке. Она всегда готова оказать посильную помощь в трудную минуту. Она никогда не боялась трудностей, готова была в любую минуту выехать на ферму или в поле; всегда была в гуще событий и дел. Многие из ее клиентов и сотрудников с благодарностью вспоминают помощь и поддержку.

«Волею судьбы с этим позитивным и добродушным человеком я познакомился в 2004 году, – рассказывает экс-директор СХПК-колхоз им. Ленина Святослав Егоров. – В 2006 году мы получили кредит в 15 млн рублей по одному из проектов развития сельского хозяйства, с помощью которого построили доильный зал, реконструировали Клычевскую ферму, закупили породистых телок. Благодаря этим средствам, которые нам помогла получить Галина Алексеевна, по сей день коровник существует и функционирует». По словам Святослава Александровича, Галина Алексеевна всегда отличалась отзывчивостью, она могла задерживаться после работы, дождаться задержавшегося в дороге руководителя либо главного бухгалтера.

«Она не сидела на месте, вместе с начальством выезжала в другие районы, чтобы ознакомиться с работой других отделений, посещала сельхозпредприятия района, – делится главный бухгалтер СХПК-колхоз им. Ленина Ирина Ильина. – Она всегда советовала, какой лучше взять кредит, избежать просрочек, правильно оформить документы. Мы всегда могли обратиться к ней за советом, как найти выход из какой-либо ситуации».

На момент знакомства с Галиной Глухаревой Николай Скворцов занимал должность директора СХПК «Атлашевский». «На одном из республиканских семинаров они презентовали свой банк, знакомили с условиями кредитования сельхозпредприятий, – вспоминает Николай Иванович. – С тех пор мы стали их постоянными клиентами. Каждый год мы брали кредит на весенний сев в 2-3 млн рублей. В 2002 году получили инвестиционный кредит в 5 млн рублей на 5 лет, с помощью которого реконструировали ферму на 800 голов». По словам Николая Скворцова, работа банка их полностью устраивала, всегда все кредиты выдавались вовремя. «Галина Алексеевна – удивительный человек, находила индивидуальный подход к любому человеку. Никогда не повышала голос, терпеливо объясняла и профессионально выполняла свою работу», – делится Николай Иванович.

Генеральный директор ЗАО «Агрофирма «Ольдеевская» Евгения Беликова отзывается о Галине Глухаревой как о добрейшем человеке, безотказном, открытом. «Только добрые и ласковые слова хочется произносить в адрес Галины Алексеевны и пожелать ей долгих лет жизни, крепкого здоровья и благополучия», – поздравила Евгения Алексеевна.

«В 2006 году меня назначили руководителем сельхозпредприятия. Времена были тяжелые, без кредита обойтись было невозможно. Благодаря профессионализму Галины Алексеевны наш колхоз встал на ноги. Хочется еще добавить о нынешних работниках, которых она обучила и оставила после себя. Они так же грамотно ведут свою работу и всегда протягивают нам руку помощи», – отметил Василий Яковлев, генеральный директор ЗАО «Прогресс».

За большой вклад в дело банковского обслуживания сельских товаропроизводителей, участие в реализации кредитно-денежной политики государства Галина Глухарева была отмечена Почетной грамотой Чебоксарского района, награждена Памятным знаком и Почетной грамотой АО «Россельхозбанк», Почетной грамотой Министерства сельского хозяйства Чувашской Республики.

Кроме всех вышеперечисленных наград, Галина Алексеевна удостоена Почетной грамоты Союза ветеранов АПК ЧР за большой вклад в развитие агропромышленного комплекса Чувашской Республики, активное участие в ветеранском движении и в связи с 65-летием.

Коллектив Чувашского регионального филиала АО «Россельхозбанк» сердечно желает юбиляру крепкого здоровья, долгих лет жизни, внимания и любви близких! Галина Алексеевна, мы Вас любим и ценим вклад в развитие Банка и агропромышленного комплекса республики!

**ЕЛЕНА ДАДЮКОВА**



Члены Союза ветеранов АПК Чебоксарского района

**СПРАВОЧНО**

**Галина Глухарева является членом Союза ветеранов агропромышленного комплекса Чебоксарского района, который создан решением Собрания ветеранов АПК района 26 мая 2014 года.**

**Председателем Союза избран Святослав Егоров, бывший председатель СХПК-колхоз им. Ленина. Организация является добровольным некоммерческим общественным объединением ветеранов АПК, созданным на основе общности интересов его членов для достижения уставных целей.**

**Организация содействует членам Союза в защите их законных прав и интересов в решении социальных проблем, оказании им моральной помощи. Взаимодействует с государственными, муниципальными органами и общественными организациями, творческими союзами и СМИ с целью активизации ветеранского движения в аграрном секторе экономики, организации участия ветеранов в разработке и реализации перспективных и текущих программ развития аграрного сектора, в вовлечении их в патриотическое воспитание населения в духе бережного отношения к природным ресурсам, животному миру, увековечению памяти талантливых организаторов АПК ЧР.**



Вручение членского билета Союза ветеранов АПК Чувашской Республики

ТУРИЗМ

# Килсе курăр пирĕн яла

**Сăвар-пăлхар халăх культурин тата «Чăваш керем» краеведенипе туризм центрĕн никĕсĕнче хăпартнă Станъялти почта историйĕн музейне (М7 трассăн 630-мĕш çухрăмĕнче вырнаçнă) кăçалхи июнĕн 25-мĕшĕнче куракан валли уçĕç. Çакăн пирки Чăваш краевечĕсен канашĕн председателĕ Сергей Сорокин пĕлтерчĕ. Вăл – строительство ĕçĕсен пуçаруçи.**



Станъял ял çывăхĕнчи краеведенипе туризм центрĕнче уçма планланă музей проекчĕн эскизĕ

**СĂМАХ МАЙ**

**Паянхи кун республикăра 15 ял-сала хăна çурчĕ тата экологи туризмĕн 10 ытла объекчĕ шутра тăрать.**

## Нимелле пухаççĕ

Хальхи вăхăтра 200 тăваткал метр лаптăклă музей çуртĕнче витринăсем тата хатĕр-хĕтĕр вырнаçтарнă. Кунсăр пуçне 8 экспозици конструкцийĕ: почта станцийĕ, тимĕрçĕ, сăра лаççисем, хурал башни, платник эртелĕ, тăм савăт ăсталăхĕ, суту-илÿ лавкки, пир-авăр мастерскойĕ йĕркеленĕ. Музейри экспонатсене Шăмăршă районĕнчен, Буинскран ярса панă. Вырăнта пурăнакан Владимир Деревьев музея кивĕ пукансем, шкапсем, патефон панă.

Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕнче вырнаçтарма палăртнă музей туристсен маршручĕн пĕр пункчĕ пулать. Музей никĕсĕнче – Станъялта тахçан пулнă почтăпа лавçă станцине çĕнĕрен çĕклес шухăш. Истори тата культура пуянлăхĕпе ял тăрăхĕнчи турист маршрутне çитекенни районта урăх пулмĕ. Туристсене Шупашкаркассинчи мăн юман патĕнчен Атăл çинчи Чорабатор ту патне, унтан Атăлъял урлă («Городище шумер») Станъялти «Чемен карти» таран, çакăн хыççăн Çĕлтикассинчи Турă амăшĕн Владимир турăшĕн чиркĕвне çитерĕç, унта вĕсем валли вырăнти чиркÿ хорĕ юрлать.

Сергей Сорокин сăмахĕсем тăрăх, турист маршрутне Станъялти «Чемен карти» этнокомплексри туризмпа краеведени центрне, автопарковкăллă, 120 вырăнлă наци апат-çимĕç кафине кĕртнĕ.

## Канмалли чатăр, суту-илÿ речĕ

Туризм отраслне аталантарас тĕлĕшпе кунта плансем анлă, Сергей Сорокин «Чăваш керем» проекта пурнăçа кĕртме тĕллев лартнă. Унта «Чемен карти» этнокомплексăр пуçне сăвар-пăлхар-чăваш культурин этнографи музейĕ, Çĕпĕр тракчĕн тата Стан Ял почта станцийĕн музейĕ, «Сувар» хăна çурчĕн комплексĕ, сăвар-пăлхар-чăваш культурисене тĕпе хурса хăпартнă «Чăваш Керем» историпе йăла-йĕрке чартакĕ, «Хĕвел ачи» ача-пăча хули, кĕрешÿ, кире пуканĕ йăтассипе ăмăртусем ирттерме спорт площадкисем, футбол тата волейбол уйĕсем, ял хуçалăх продукцийĕн тата халăх ал ăсталăхĕн суту-илÿ речĕсем, хăна çурчĕсем тата канмалли чатăрсем. Туристсене йышăнмалли программăпа килĕшÿллĕн этнокомплексра чăваш халăх йăли-йĕркипе паллаштаракан этнографиллĕ театрализаци, Кĕр сăри тата çăварни уявĕсене ирттермелле.

Инвестицисен пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 16 млн ытла тенкĕпе танлашать. «Çак проекта янă укçа-тенкĕ хăйĕн хакне кăларасси пирки хальлĕхе эпĕ шухăшламастăп. Мĕншĕн тесен пурлăхсырлăхсăр пуçне халăх несĕлне сыхласа хăварассишĕн тата аталантарассишĕн, халăхра сарассишĕн тăрăшмалла», – тет Сергей Сорокин. Маршрутăн кашни пайне, тĕпрен илсен халăх ертÿçи Пăрттас кнеç (XVI ĕмĕр), Чорабатор (XII ĕмĕр) биографийĕсене тĕпчессипе Минин çар пуçĕн юманне çĕнетесси Виталий Станьял краевед ертсе пынипе пулса пырать.

Аса илтеретпĕр, 2010 çулта Шупашкар районĕнче «Князь Буртас» палăкĕн проектне тăвассипе уçă конкурс иртнĕччĕ. Ăна Шупашкаркассинче уçма планланăччĕ. Конкурса йышăннă ĕçсене «Бичурин тата хальхи самана» музейра халăх умне сÿтсе явма тăратнăччĕ. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕн Петр Пупинăн тата Владислав Зотиковăн ĕçĕсенчен музея килнисем пĕрремĕшĕнне ырланă. Минин, Пожарский тата Буртас кĕлеткисен 13,35 метрлă палăкăн пĕр пайне Пупин мастерскойĕнче туса пĕтерне те ĕнтĕ.

**АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА**

ÇУЛЛАХИ КАНУ



## Каникул усăллă пуçланчĕ

Ишек шкулĕнчи 3-мĕш тата 4-мĕш классене пĕтернĕ ачасемшĕн çуллахи каникул усăллă пуçланчĕ. Июнĕн 2-мĕшĕнче Екатерина Ивановнăпа Ирина Вячеславовна вĕрентекенсем ертсе пынипе 20 ача ирех шкул автобусĕпе Кÿкеçелле çул тытрĕç. Чи малтанах ачасем «Бичурин тата хальхи самана» музейри экскурсие хутшăнчĕç. Пĕлмелли тата кăсăкли, чăнах та, питĕ нумай. Бичурин историе мĕнпе кĕрсе юлни, мĕншĕн Чăваш Республикинче ун ячĕпе музей уçни çинчен пĕлме интереслĕ пулчĕ ачасене. Тĕл пулу вĕçĕнчи викторина куракансен тимлĕхне тĕрĕслеме май пачĕ. Асăнмалăх сăн ÿкерĕнсен ачасем малалла Кÿкеçре вырнаçнă 41-мĕш пушар чаçне çул тытрĕç, унти музейпе паллашрĕç. Наталья Николаевна экскурсовод пушарнăйсен историйĕпе паллаштарчĕ, пĕчĕк ачасем айкашни часчасах пушар сăлтавĕ пулни пирки аса илтерчĕ. Юлашкинчен чăн-чăн пушар сÿнтерекен машинăсене курчĕç кĕçĕн класра вĕренекенсем. Ачасем ку куравран питĕ кăмăллă тухрĕç.

**ЕКАТЕРИНА ГРИГОРЬЕВА, ИШЕК**

## Сада – кĕнеке вулама

**Ĕнер Кÿкеçри тĕп библиотека умĕнче çуллахи вулавăш лапамĕсем уçăлчĕç. Райадминистрацин культура, туризм тата социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ Маргарита Павлова çакăн пек акцисем кĕнеке-журнал вулакансен шутне ÿстерме пулăшасса шаннине пĕлтерчĕ.**

Библиотека ĕçченĕсем тăрăшнипе литература вучахĕ ялкăшсах тăнине палăртрĕ вăл. «Ĕçе юратса туса пырсан кăна çынсене унта илĕртме пулать», – терĕ Маргарита Яковлевна библиотекарьсене. Кÿкеçри тĕп библиотека директорĕ Галина Тимофеева çакăн пек лапамсем 4-мĕш хут уçăлнине палăртрĕ. Кашни иртен-каян çак çуллахи вулавăш залĕсене кĕрсе кĕнекене пĕрле илме пултарать. Кăçал акцие экологи çулталăкне халалларĕç. Унпа килĕшÿллĕн мероприятие хутшăнакансем экологи темиллĕ литературăпа паллашĕç.

Паллах, çуллахи вулавăш лапамĕсене мĕн чухлĕ çын пухăнасси çанталăкран килет. Акă паян та хĕвел çумăрпа ылмашăннă май официаллă пай хыççăн мероприяти библиотекăна куçрĕ. Кунта районти библиотека заведующийĕсем экологи темипе «Мĕн? Ăçта? Хăçан?» вăййа вылярĕç. Библиотекарьсем вулакансем ярса панă кăсăклă ыйтусен тупсăмне шырарĕç. Галина Тимофеева Кÿкеçре çуллахи виçĕ лапам уçăлмалли пирки каларĕ. Вĕсем библиотека умĕнче, Бичурин садĕнче тата общество транспорчĕн юлашки чарăнăвĕнче вырнаçрĕç.

**АНЖЕЛИКА ФАДЕЕВА**

**Ыран Çĕньял ял тăрăхĕнчи Мошкасси ялĕнче «Отклик» лаша спорчĕн клубĕн Кубокне çĕнсе илессишĕн чăрмавлă маршрута хыçа хăварса лашасемпе ăмăрту иртет.**

**Пĕлтĕр унта 40 ытла çын хутшăннă. Ыран Мошкассине Чĕмпĕртен, Чăваш Енрен, Мускав облаçĕнчен 18 спортсмен çитмелле. Вĕсен урхамахпа ярăнас ăсталăхне республика тÿрисем хак парĕç.**

**Клубăн халăхпа çыхăнакан менеджерĕ Дарья Просолова пĕлтернĕ тăрăх, 2013 çулта тиха пулнă рысак урхамахĕсен, юртăпа хытă чупакан ăратлă лашасен, 2015 çулта тиха пулнă аслă çулти рысаксен, вырăс рысак ăрачĕн чупăвĕсене ирттерме планланă. Çавăн пекех çÿлти ăратлă, харсăр характерлă тата çемçе кăмăллă, вырăнти ăратлă лашасен чупăвĕсем иртмелле. Чупусем 10 сехетре пуçланаççĕ.**

САЛАМЛАТПĂР!



Карандай ялĕнче пурăнакан **Зоя Степановна СТЕПАНОВĂНА** 85 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. 85 çул сисĕнмесĕрех юлчĕ хыçала, яту-суму çĕре ÿкмерĕ, хисепрех эсĕ ял-йышра. Турă сана нумай çул пурăнма сывлăхпа хăват парсах тăтăр. Çумра яланах ырă та шанчăклă çынсем, умра çутă кунсем пулччăр. Эпир санпа мухтанатпăр, эсĕ çак тĕнчере пурришĕн савăнатпăр, мĕн пур ырришĕн тав тăватпăр.

■ *Хĕрĕсем, ывăлĕсем, кинĕсем, кĕрÿшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, пур тăванĕсем тата ял-йыш.*

05-36



Тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакана, **Виктория Анатольевна ВЫШИНСКАЯНА,** юбилей ячĕпе чун-чĕререн ырă та ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ĕмĕрĕн сарлака çул-йĕрĕпе малалла та шанчăклă утмашкăн ырлăх-сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемьере юратупа килĕшÿ сунатпăр.

Телейлĕ, сывлăхлă пулсамăр,
Ан сÿнтĕр савăнăç нихçан.
Ăнăçупах пĕрле утсамăр,
Çак пурнăçра эсир ялан.

■ *Ĕçтешĕсем.*

06-12

БЛАГОДАРНОСТЬ

В канун годовщины ухода из жизни Геннадия Васильевича Романова - моего отца, деда моего сына, нашего друга, наставника и учителя, выражаю благодарность всем, кто разделил с нами боль утраты.

Благодарим Главу Чувашской Республики Михаила Васильевича Игнатьева, Руководителя Администрации Главы Чувашской Республики Юрия Егоровича Васильева за поддержку и участие.

Особая наша благодарность Александру Вениаминовичу Бородавину, Максиму Александровичу Бородавину, Александру Алексеевичу Кочурову, в очень трудную для нас минуту пришедшим на помощь.

■ *Дочь Лариса Геннадьевна и внук Юрий Александрович Романовы.*

05-64.

Тăванăрсене

САЛАМЛАМА АН МАНĂР

салам – 500 тенкĕ

сăн ÿкерчĕк – 100 тенкĕ

ШУТА ИЛМЕ

**ЧР Сывлăх сыхлав министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх, республикăра çынсене канмалли тата ĕçлемелли мар уяв кунĕсенче,** 2017 çулхи июнĕн 10-12-мĕшĕсенче, июнĕн 24-26-мĕшĕсенче, больницăсенче амбулатори тата стационар условийĕсенче медицина пулăшăвĕ парассине çак графикпа йĕркелĕç: июнĕн 10-мĕшĕнче – шăматкунхи графикпе, 8-13 сехетсенче выскавлă медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерĕç, тухтăра 12 сехетчен чĕнсе илме май пур; июнĕн 11-мĕшĕнче тата 25-мĕшĕнче – канмалли кун, июнĕн 12-мĕшĕнче тата 24-мĕшĕнче – ĕçлемелли мар уяв кунĕсем. Республика кунĕ, июнĕн 24-мĕшĕ, кăçал шăматкунпа тĕл килсен те, федераци законодательствипе килĕшÿллĕн, ку кану кунĕ урăх куна куçмасть.

ÇАНТАЛĂК

www.meteorf.ru сайт пĕлтернĕ тăрăх

| | | | |
|---|---|---|---|
| Эрнекун ...Июнь, 9 | +20° | +8° | |
| Шăматкун ...Июнь, 10 | +22 ° | +8° | |
| Вырсарникун ...Июнь, 11 | +21 ° | +11° | |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Июнь | 12 | Тунтикун........ | +22° |
| Июнь | 13 | Ытларикун ....... | +21° |
| Июнь | 14 | Юнкун ............ | +22° |
| Июнь | 15 | Кĕçнерникун.... | +20° |

валюта курсĕ 09.06.2017

$ 56,99

€ 64,15